ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Март
2
ВЫРСАРНИКУН
№ 45 (8697)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Çураки умĕн (1 стр.).
Хамăр республика тăрăх (1 стр.).
М. Гаркушенко. — Ленинпа Сталин партин çиччен вĕрентнин аслă вăйĕ. И. В. Сталин 1937 çулта ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти-мартри Пленумĕнче доклад тунăранпа вунпилĕк çул çитнĕ май (2 стр.).
ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРМАЛЛИ СТАХАНОВЛА УЙĂХЛĂХ. Етĕрне вăрман пунктĕнчен килнĕ çырусем (3 стр.).
Н. Терентьев. — «Ревизор» (3 стр.).
Ф. Лукин. — Юрă сăмахĕсем пирки (3 стр.).
Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх (3 стр.).
И. Саплин, А. Миликян. — Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Демократиллĕ Корея Халăх Республикин çар комитечĕ йышăннă постановлени (4 стр.).
Бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç тăтăклă мерăсем йышăнма ыйтаççĕ (4 стр.).

Колхозниксем отчетпа суйлав пухăвĕсенче панă наказсене тимлĕн пурнăçламалла

Республикăри колхозсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пысăк активлăхпа иртрĕç. Çакă вăл колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăхне малалла аталантарма, Тăван çĕршывăн хăватне пĕрмай ÿстерсе пыма тăрăшнине уçăмлăн кăтартса парать. Ял ĕçченĕсем, пухусенче çитĕнÿсене кăтартса панипе пĕрлех, критикăпа самокритикăна анлăн сарса, ĕçри çитменлĕхсене хăюллăн палăртрĕç, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕç.

Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозăн çитĕнĕвĕсене пур ялхуçалăх артелĕсем те пĕлеççĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕ 1951 çулхи ĕçсене пĕтĕçтерсе çакна палăртрĕ: пĕлтĕр кашни гектартан вăтам шутпа 23-шер центнер тĕштырă пухса кĕртнĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пур выльăхсем енĕпе те иртерсе тултарнă, укçа тупăшĕ пĕр миллион та çичĕ пин тенкĕне çитнĕ, валеçĕнмен фонд икĕ миллион тенкĕрен иртнĕ. Государство панă мĕнпур заданисене чылай иртерсе тултарнă.

Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем çак çитĕнÿсемпе лăпланса ларма шутламаççĕ, вĕсем малашне çĕнĕ ÿсĕмсем тăвас шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ. Çавна отчетпа суйлав пухăвĕ те лайăх кăтартса пачĕ. Колхозниксем, артельти пысăк майсемпе усă курса, кăçал кашни гектартан 30-шар центнер тĕштырă туса илме, техникăллă культурăсем акакан çĕр лаптăкне пилĕк хут ÿстерме, колхозăн укçа тупăшне икĕ миллиона çитерме йышăнса хăварчĕç.

Хăйсем тунă çитĕнÿсене тĕпчесе тишкерекен ялхуçалăх артелĕсенче нихçан та лăпланса ларни пулмасть. Ун пек çĕрте яланах малашнехине асра тытса ĕçлеççĕ. Елчĕк районĕнчи пĕрлешсе пысăкланнă Мичурин ячĕпе тăракан Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ колхоз членĕсем иртнĕ çулта обществăллă хуçалăха вăйлатас тĕлĕшпе палăрса тăракан çитĕнÿсем турĕç. Тухăçлă тырпул çитĕнтерекен бригадăсен шучĕ ÿссе пырать. Пĕлтĕр виçĕ уй-хир бригади кашни гектартан 18—19-шар центнер тĕштырă пухса кĕртнĕ. Колхозниксем отчетлă пухура çапла калаçрĕç: эпир, тăрăшса ĕçлесе, çитĕнÿсем турăмăр, ку аван, анчах малашне хальхинчен лайăхрах ĕçлес тесен, правленин агрономи наукин вĕрентнине тата малта пыракансен опытне производствăна анлăрах кĕртсе пымалла, унсăрăн пурнăçран юлма пулать. Отчетлă пуху, наказсем парса, правление уйрăмах агротехникăллă ĕçсене пур вăхăтра та çирĕп пурнăçласа пырассине организацилеме хушрĕ.

Нумай колхозсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсенче колхозниксем МТС-сен техникипе, колхозсенчи ĕç вăйĕпе усă курассине тĕрĕс йĕркелеме, ĕçкунĕсен минимумне тултарман йăлана пĕтерме кирлине çивĕччĕн кăтартса хăварчĕç. Акă, Етĕрне районĕнчи «Правда» колхоз организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр тĕреклентерсе пырать. Пĕлтĕр унта тырпул туса илмелли плана, пăрисĕр пуçне, пĕр культура тăрăх та тултарман, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана та пурнăçламан. Артеле МТС начар пулăшать. Колхозра ĕç дисциплини çирĕп мар, правлени колхоз демократине çирĕп пурнăçласа пымасть. Отчетпа суйлав пухăвĕ çак çитменлĕхсене тивĕçлипе уçса палăртман.

Халĕ ĕнтĕ ялхуçалăхĕнчи ăнăçлăха колхозсемпе МТС-сем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлени татса парать. Государство паракан хăватлă техникăпа çителĕклĕ таран усă курмасăр малалла каясси çинчен шухăшламалли те çук. Анчах хăшпĕр районсемпе колхозсенче машинăпа ĕçлессине хирĕçле шухăшсем палăраççĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсене механизацилесси уйрăмах Октябрьски, Пшлей, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр районĕсенче юлса пырать. Техникăна хакламанни ытти районсенчи колхозсенче те пур.

Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин МТС-сене ертсе пырассине тĕпрен лайăхлатмалла. Унăн тата парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен машинăсемпе ĕçлессине хирĕçле шухăшсене пĕтерсе пымалла, ялхуçалăхне механизацилес ĕçĕн шайне хăпартмалла, техникăпа колхоз производствин мĕнпур отраслисенче анлă усă курмалла, унпа тухăçлă ĕçлемелле. Колхозсенче ĕç вăйĕпе усă курассине тĕрĕс йĕркелени, колхозниксен производствăри активлăхне, ĕç пахалăхне ÿстерни кирлĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем отчетпа суйлав пухăвĕсенче правленисем тырпул тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ÿстерме пур майсемпе те усă курманнине кăтартса пачĕç, ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене пĕтерме, çуракине тĕплĕн хатĕрлеме, ăна кĕске вăхăтра, лайăх пахалăхпа иртерме, курăк акмалли уйлă çĕрĕç системинче палăртнă ĕçсене тĕплĕн пурнăçлама хушса хăварчĕç. Колхоз правленийĕсен тивĕçĕ—çак паха наказсене пĕтĕмпех пурнăçласси пулса тăрать.

Халĕ колхозсенче çулталăкри производство планĕсене, тупăшпа расход сметисене тăваççĕ. Правленисен, парторганизацисемпе ялти активăн производство планĕсем тунă чухне колхозниксен наказĕсене шута илмелле. Производство планĕ тăрăх бригадăсемпе фермăсене заданисем панă чухне те отчетпа суйлав пухăвĕнче панă сĕнÿсене манас пулмасть.

Районти ялхуçалăх пайĕсемпе МТС-сен, колхозниксем панă наказсене пĕтĕçтерсе, хăйсем валли тивĕçлĕ выводсем тумалла, ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене хăвартрах пĕтермелле.

Большевиксен партийĕ çапла вĕрентет: ялхуçалăхĕнчи тĕп задача вăл—мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне чылай ÿстересси, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне хăвăрт ÿстерсе пынă вăхăтрах, унăн тухăçлăхне чылай ÿстерессипулать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ Чăваш республики ялхуçалăхĕ умне конкретлă задача лартрĕ. Пирĕн çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче кашни гектартан туса илекен тĕштырă тухăçлăхне 18 центнертан кая мар çитермелле, кунпа пĕрлех ытти мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне чылай ÿстермелле; кашни ĕнерен 1.800 литр сĕт, кашни сурăхран виçĕ килограмм çурă çăм, кашни чăхран 110 çăмарта илмелле.

Республика ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăна ăнăçлă пурнăçласси ялхуçалăхне ертсе пырассине пĕрмай лайăхлатса пынинчен килет. Çакă вăл, чи малтан, колхозсен обществăллă хуçалăхне пур енĕпе те аталантарса, колхоз кадрĕсен ăсталăхне ÿстерсе пыма кирлине, колхозсене ертсе пыма ялхуçалăх специалисчĕсене суйласа илме кирлине пĕлтерет. Çавăн пекех тĕрĕс пусă çаврăнăшĕсем тăвасси, ĕçе тĕрĕс йĕркелесси, производствăллă бригадăсене çирĕплетсе пырасси, выльăх-чĕрлĕх витисем тата обществăллă ытти çурт-йĕрсем тăвасси çине те тимлĕ пăхмалла.

Ялхуçалăхне ертсе пырассине лайăхлатас тесен, парти органĕсен колхозсемпе МТС-сенчи парторганизацисен ĕçне çÿлĕ пусăма çĕклемелле, вĕсен колхозсемпе МТС-сен ĕçĕнчи рольне ÿстермелле. Пуçламăш парторганизацисен халĕ, отчетпа суйлав пухăвĕсенче парса хăварнă наказсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме мобилизацилемелле. Парторганизацисен массăсем хушшинче организациллĕ тата политикăллă ĕçе, ялти социализмлă ăмăртăва пĕрмай вăйлатса пымалла.

Социализмлă ăмăрту колхозсене государство паракан плансене пурнăçлама, ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан тĕп задачăна татса пама, МТС-сен техникипе тухăçлă ĕçлеме, колхозсен вырăнти мĕнпур ресурсĕсемпе усă курма пулăшмалла. Ял ĕçченĕсене социализмлă ăмăртăва активлă хутшăнтарнă май, ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхне ÿстерсе, колхоз производствине наука çитĕнĕвĕсемпе ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опытне анлăн кĕртсе пырас пулать. Ăмăртура колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем кăçал парса хăварнă наказсем пурнăçланса пынине курма пултарччăр.

Колхозниксемпе колхозницăсен социализмлă ăмăртăвне куллен ертсе пырасси, отчетпа суйлав пухăвĕсенче панă наказсене çине тăрса пурнăçа кĕртесси, массăсен творчествăллă пуçарулăхне çÿлĕ пусăма çĕклесси парти организацисен ĕçĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла. Çакă вăл—ялхуçалăхне малалла аталантарса пымалли услови.

„Агитатор блокночĕн" черетлĕ номерĕ

ВКП(б) Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, тăваттăмĕш номерĕ пичетленсе тухнă. Унта Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ—мартăн 8-мĕшĕ çинчен калаçу иртермелли материал пысăк вырăн йышăнать.

«Коммунизмăн аслă стройкисем» ятлă пайра Е. Семеновăн—«Атăлпа Дон хушшинчи канал» ятлă статья пичетленнĕ. Агитаци ĕçĕн опытĕнчен Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнчи цех начальникĕ И. Кондюров цехра продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешес ĕçе мĕнле организациленĕ çинчен çырнă статья пур. Кунсăр пуçне «Блокнотра» хуласемпе ялсенчи агитаторсен шкулĕсен ĕç планĕсене пичетлесе кăларнă.

Совет Союзĕ тăрăх

Гоголь кунĕсем

КИЕВ. Кунта вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнине паллă тумалли вунăкунлăх пуçланнă. Т. Г. Шевченко ячĕпе тăракан университетра ученăй советăн чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ. Украина ССР Наука академийĕн действительнăй членĕ А. П. Белецкий «Гоголь тата Украина» темăпа доклад туса панă.

Актерсен суртĕнче ĕнер Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнĕ ятпа литература каçне иртернĕ.

Культура дворецĕсенче, клубсенче, предприятисенче Гоголь произведенийĕсене вуласа параççĕ.

БАКУ. Азербайджанри С. М. Киров ячĕпе тăракан государство университечĕн филологи факультетĕнче Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнĕ ятпа научнăй сесси уçăлнă. Сессире «Гоголь—вырăссен аслă реалисчĕ», «Гоголь тата азербайджан совет литератури» тата ытти темăсемпе докладсем итленĕ.

Азербайджанри В. И. Ленин ячĕпе тăракан педагогика институтĕнчи научнăй сессире «Петербургри повеçсен социальнăй сатири», «Гоголĕн вырăс литература чĕлхин историйĕнчи ролĕ» тата ытти темăсемпе те докладсем пулнă.

К. Маркс ячĕпе тăракан халăх хуçалăх институтĕнче тата ытти аслă шкулсенче те Н. В. Гоголь ячĕпе научнăй сессисем, студентсен каçĕсем тата литература каçĕсем пулса иртеççĕ.

Азербайджан ССР Наука академийĕн чĕлхепе литература институчĕ «Н. В. Гоголь тата азербайджан литератури» ятлă сборника пичете пама хатĕрлесе çитернĕ.

СТАЛИНАБАД. Таджик государство издательстви Н. В. Гоголĕн таджик чĕлхи çине куçарнă произведенийĕсен пуххине пичетлесе кăларнă. Унта «Тарас Бульба», «Повесть о том, как поссорился Иван Иванович с Иваном Никифоровичем», «Невский проспект», «Шинель», «Ревизор» тата ытти произведенисем те кĕнĕ.

Февралĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС).

Аслă стройкăн тĕп участокĕнче

СТАВРОПОЛЬ, февралĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Жигули тĕлĕнче Атăл çинче çил-тăман уласа тăрать. Анчах Куйбышеври гидроузела тăвакансен хастарлă ĕçне сивĕ хĕл чăрмантараймасть. Стройкăн тĕп участокĕнче—гидроэлектростанци никĕсĕ пулмалли вырăнта перемычкăсем тунă çĕрте ĕç хăвăртлăхĕ кунтан-кун ÿссе пырать. Кунта металран тунă шпунтсене çапса лартаççĕ, перемычкăна чул тăкаççĕ тата çĕр уçлакан снарядсемпе тăпра купалаççĕ.

Вăхăт кĕтмест. Тепĕр уйăх—уйăх çурăран Атăл çинче пăр тапранмалла. Пăр кайнă вăхăтра юханшыв питех те вăйлă юхать, анчах хăйĕн çулне пÿлсе тăнине тĕл пулсан, вăл татах та хытăрах хĕсме пултарать. Строительсем çакна лайăх ăнланаççĕ, çавăнпа та вĕсем перемычкăна шыв сăрхăнса кĕмелле мар тума хытă тăрăшаççĕ, ку енĕпе пур ĕçсене те тăваççĕ.

Иртнĕ хĕлле шыва чул тăкса бункетсем тунă вырăнта халĕ тăпраран тунă вуншар метр сарлакăш пĕве çĕкленсе тăрать, тăршшĕ унăн çур километра яхăн. Ăна Атăл тĕпне çапса кĕртнĕ металран тунă шпунт хÿтĕлесе тăрать. Атăл шывĕн пусăмне хирĕç тăма перемычка хĕррине хурçă шпунтран тунă пăр катмалисем 8 лартмалла. Вĕсене çĕр уçлакан снарядсемпе купаланă тăпра çине лартаççĕ тата ăшне чул тултараççĕ.

Перемычка çинче кунĕн-çĕрĕн хĕруллĕ ĕç вĕресе тăрать. Шпунта 12 копрпа çапса кĕртеççĕ. Копрпа ĕçлекен Киреев, Гельманов тата Шмелев, машинист пулса ĕçлекен Зюмин, Талавушкин тата ыттисем те хăйсен заданийĕсене 150—200 процент тултараççĕ. Пĕр сменăра 6-шар тонна шпунт çапса кĕртес вырăнне вĕсем 12—15-шер тонна çапса кĕртеççĕ. Минскри тата Ярославльти заводсенче туса хатĕрленĕ хăй тĕллĕн пушатакан иксĕр ытла автомашинăпа татти-сыпписĕр тăпра тата чул турттарса тăраççĕ. Сылтăм çыранти гидротехникăллă районта автомашинăсемпе ĕçлекенсем уйăхри плана февралĕн 23-мĕшĕнчех тултарнă. Сменăри задание вĕсем пурте 180—190-шар процент тултарса пынă.

Строительсем февральте 40.000 кубометр чул купаламалла пулнă. Могутова тăвĕ çинчи карьер районĕн коллективĕ икĕ кун каярах çак задание срокчен тултарни çинчен рапорт панă.

Çĕр уçлакан снарядсемпе перемычкăна купалас ĕçĕн хăвăртлăхĕ куллен ÿссе пырать.

Атăлпа Дон хушшинчи канала тăвакансен çĕнĕ çĕнтерĕвĕ

ДОН çинчи КАЛАЧ, февралĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Атăлпа Дон хушшинчи канала тăвакансем хăйсен ĕçĕнче çĕнĕ пысăк çĕнтерÿ тунă. Паян Карповскри насус станцийĕн иккĕмĕш агрегатне ĕçе янă.

14 сехет те 45 минутра металран тунă щитсене хăпартма приказ панă. Шыва ĕмсе илекен трубасене шыв тулнă. Мотора ĕçе янă. Насусăн пите пысăк валĕ пĕр самантрах пысăк хăвăртлăхпа — минут хушшинче 250 оборот туса ĕçлеме тытăннă. Насус уçлакан шыв шавласа хăпарма тытăннă. Иккĕмĕш насус башнинчен шыв хытă вĕрлесе юхма пуçланă. Станцири халĕ ĕçлекен икĕ насус Карповски водохранилище пулмалли вырăна талăкра икĕ миллион кубометр ытла шыв уçласа яраççĕ.

Иккĕмĕш насуса ĕçе яни Карповски водохранилищĕне тата Атăлпа Дон хушшинчи суднăсем çÿремелли пĕтĕм канала вăхăтра шыв тултарса çитерме май парать. Нурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, пĕтĕм каналра Дон шывĕ тăмалла. Насус станцийĕсем, водохранилищĕсем тата шлюзсем урлă шыв канал тăрăх Донран Атăла юхать. Пĕрремĕш насус пĕр уйăх каялла ĕçе кĕнĕ, унтанпа вăл Карповски водохранилищĕне нумай пин кубометр шыв уçласа янă.

Çывăх вăхăтрах Мариновскри насус станцийĕ те ĕçе кĕмелле. Вăл Карповскри водохранилищĕри шыва тата тепĕр 22 метр çÿлĕшне хăпартать, çав шыва тепĕр водохранилищĕне—Береславски водохранилищĕне ярать.

Хамăр республика тăрăх

Канашри вагонсем юсакан заводра ĕçлекен работницăсем мартăн 8-мĕшне производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: заводри паллă стахановка-электросварщица А. Кашина юлташ Вăл кулленхи задание яланах иртерсе тултарать.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ умĕн

Шупашкарти чăлха фабрикин коллективĕ СССР Верховнăй Совечĕн сессине ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме хатĕрленет. Рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту сарăлнă.

Фабрикăри вуншар агитатор рабочисемпе çĕршыври новаторсем çинчен калаçусем иртереççĕ, сесси уçăлнă куна ĕçри çитĕнÿпе кĕтсе илме чĕнеççĕ.

Агитаторсен витĕмлĕ сăмахĕ рабочисене тата хастарлăрах ĕçлеме хавхалантарать. Агафия Стекольщикова—фабрикăри ăста чăлхаçăсенчен пĕри. Кулленхи задание 125—130 процент тултарса пырать. СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, вăл ĕç тухăçлăхне татах ÿстерчĕ. Çамрăк комсомолка П. Захарова юлташ опытлă рабочисенчен юлмасть, ĕç нормине яланах иртерсе тултарать.

Стахановла ĕçлекенсем фабрикăра татах нумай.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Сĕтел-пукан комбинатĕнче çак кунсенче улттăмĕш цехри М. Черняев ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригади пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. Н. Грушин станочник, П. Гаврилов столяр-сборщик, Ф. Наумов фрезеровщик кулленхи нормăна 300—400 процент таран тултарса пыраççĕ.

Пиллĕкмĕш цехра аслă мастер П. Ходунясов ертсе пыракан çамрăксен участокĕ малта пырать. Участок коллективĕ Мускаври государство университечĕ валли пĕрремĕш сортлă сĕтел-пукан туса кăларать, заказсен срокне икĕ хут кĕскетет. Ку участокра ĕç резервĕсен шкулĕн воспитанникĕсем Н. Антонов, Н. Артемьев, Н. Хомский юлташсем задание икшер хут иртерсе тултараççĕ.

Виççĕмĕш цехри столяр-стахановец В. Мытиков юлташ куллен тăватă норма таран тултарать. Ăна нумаях пулмасть СССР Хутпа йывăç япаласем тăвакан промышленность министерствин Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Н. ЕГОРОВ.

Вăрнар МТС-ĕнче çитес çуракине хатĕрленсе ялхуçалăх машинисене юсас ĕç хĕрÿллĕн пырать. Кунта кашни трактора, комбайна, кăкарса ĕçлемелли ытти машинăсене срокчен тата питĕ лайăх юсассишĕн кĕрешеççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: МТС-ри слесарь-стахановец В. Дусанов юлташ плуг юсать.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Аслă стройкăсене—йывăç

Шупашкарти пристань администрацийĕ çитес навигаци сезонĕнче грузсем турттарма тĕрлĕ организацисемпе договорсем тăвать.

Грузсен пысăк пайне коммунизмăн аслă стройкисене ăсатмалла. Вăрман хатĕрлекен предприятисем Куйбышевпа Сталинградри гидроэлектростанцисен стройкисене 95 пин кубометр йывăç ăсатма договорсем тунă. Вăрман хатĕрлекен тăваттăмĕш кантур апрельпе август уйăхĕсем хушшинче Сталинградри ГЭС строительствине 20 пин кубометр, стройвăрманпромхоз — 15 пин кубометр йывăç ăсатаççĕ.

Куйбышевпа Сталинградри гидроэлектростанцисен строительствисене Марийски вăрманпромхоз йывăçне ăсатмалла. Ку вăрманпромхоз апрельпе август уйăхĕсем хушшинче Атăл çинче аслă стройкăсене 60 пин кубометр йывăç ăсатать.

Сулăсене йĕсе кайма чи лайăх суднăсем уйăрнă.

Районти библиотекăра

КÿКЕÇ. Районти библиотекăра кĕнекесен хисепĕ çулсеренех ÿсет. Иртнĕ çулта кăна 1.512 кĕнеке туяннă. Халĕ библиотека фондĕнче 14.900 кĕнеке ытла. Унсăр пуçне библиотекăна тĕрлĕ хаçат-журналсем те нумай килсе тăраççĕ.

Кĕнекесене халăх хушшине сарас тĕлĕшпе библиотекăра ĕçлекенсем массăллă ĕçсем нумай иртереççĕ. Кунта час-часах литература каçĕсем, паллă писательсен произведенийĕсем тăрăх лекцисем пулаççĕ. Кĕнеке витринисемпе выставкисене организациленĕ.

Кĕнекесене пропагандăлас ĕçре вулакансен конференцийĕсене иртерни уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Юлашки вăхăтра А. Первенцевăн «Çамрăкранах чыс», А. Мальцевăн «Пĕтĕм чĕререн», Г. Николаевăн «Тырă вырни» тата ытти кĕнекесем тăрăх та вулакансен конференцийĕсене иртернĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Çураки умĕн

Çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн

«Сталинец» колхоз председателĕ Е. Лукин юлташ каласа пани

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Пĕчĕк колхозсенчен пĕрлешсе пысăкланнă «Сталинец» колхозра тырпул тухăçлăхне ÿстерсе пыма, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатма тата ытти отраслĕсене хăвăрт аталантарма условисем лайăхланчĕç.

Агротехникăллă ĕçсене вăхăтра туса иртернипе пĕлтĕр кашни гектартан вăтам шутпа вунултă центнер ытла тырă пухса илтĕмĕр.

Тепĕр паллă çитĕнÿ вăл—обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пур выльăхсем енĕпе те тултарни пулчĕ.

1951 çулта тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе татах та пысăкрах çĕнтерÿсемшĕн кĕрешесси—çакă пулать пирĕн кăçал пурнăçламалли тĕп задача. Эпир кăçал çакăн пек çитĕнÿсемшĕн кĕрешетпĕр: кашни гектартан 17-шер центнер тĕштырă туса илмелле; кашни ĕнерен 1.800 литртан кая мар сĕт суса илмелле; сурăхсенчен илекен çăм тухăçлăхне чылай ÿстермелле.

Çак кунсенче колхозăн уй-хирĕсенче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче тата ытти отраслĕсенче хĕрÿ ĕç пĕр самантлăха та лăпланмасть, социализмлă ăмăрту вăйланса пырать.

Çуракине хатĕрленсе эпир сахал мар ĕç тунă ĕнтĕ. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене сортласа тасатнă. Нумай çул тата пĕр çул ÿсекен курăксен вăрлăхĕсене те кирлĕ чухлех хатĕрлесе хутăмăр.

Лайăх вăрлăхран парка калча шăттăр, тухăçлă тырпул пултăр тесен, çĕре çемçетсе, çĕнетсе тăни кирлĕ. Çакна асра тытса, пирĕн уй-хир ĕçченĕсем ку таранччен уя 22 пин лав ытла тислĕк тата торф кăларчĕç. Удобренисем хатĕрлес ĕç малалла пырать: кашни кун уя 150 тоннăран кая мар тислĕк тата торф тухать.

Бригадăсем калчана апат пама кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе кĕл чылай пухса хучĕç, уй-хирте юр тытса хăварчĕç. Малта пыракан колхозсен примерĕпе ĕçлесе, кăçал минераллă удобренисемпе те анлăрах усă куратпăр.

Çуракине лайăх хатĕрленессишĕн тимĕрçĕсем те тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем плугсемпе сеялкăсене, çÿресемпе ытти ялхуçалăх машинисене пурне те юсарĕç. Ватă колхозниксем мастерскойра урапасемпе лаша кÿлмелли хатĕрсене пĕтĕмпех юсарĕç, çĕнĕрен чылай турĕç.

Çывăх вăхăтрах пусă çаврăнăшне йĕркелесе çитеретпĕр. Выльăх апачĕ акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлеме ятарласа бригада организацилерĕмĕр, вăл та çуракине хĕрÿллĕн хатĕрленет. Пысăк тухăçлă тырпул пулăшăн пур бригадăсем те ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура М. Хлебнов юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать.

Пирĕн колхоз членĕсем кăçсенче агротехникăна, зоотехникăна тата ялхуçалăхĕнче малта пыракансен паха опычĕсене тимлĕ вĕренеççĕ. Колхозра агрозоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссем ĕçлеççĕ. Вĕсенче пурĕ 64 колхозник вĕренет.

Çамрăксен хастарлăхĕ

СОВЕТСКИ. Иртнĕ çулта «Самолет» колхоз вăйлă тырпул ÿстерчĕ. Çак ĕçре колхоза комсомолецсемпе çамрăксем пысăк пулăшу пачĕç.

Кăçал колхозниксем кашни гектартан çĕр пăтран кая мар тĕштырă туса илме, çавăн пекех пысăк тухăçлă техникăллă культурăсем, выльăхсене çитермелли тымарçимĕçсем ÿстерме сăмах панă. Çав сăмаха пурнăçлас тесе, колхозниксем тырпул тухăçлăхне ÿстерме пулăшакан пур майсемпе те туллин усă курма тăрăшаççĕ.

Вырăнти удобренисене нихăш çулхинчен те ытларах хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Комсомолецсем хăйсен пухăвĕнче юшкăн тăприне хире кăларасси çинчен сăмах хускатнă. Вара çав тăпрана хире кăларма пуçланă. Хастарлă çамрăксем уя пурĕ 1.435 лав юшкăн тăпри кăларнă.

Колхозри комсомолецсемпе çамрăксем февралĕн 25-мĕшĕпе мартăн 5-мĕшĕ хушшинче удобренисем пухмалли тата вĕсене хире кăлармалли стахановла вунăкунлăх иртерме йышăнчĕç. Çак вунăкунлăхра уя икĕ пин тонна ытла тислĕк, темиçе çĕр тонна юшкăн тăпри кăларма, кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ нумай пухма палăртнă. Комсомолецсемпе çамрăксем районти мĕнпур комсомолецсемпе çамрăксене хăйсенчен пример илме чĕннĕ.

ВЛКСМ райкомĕ çак паха пуçарăва ырларĕ тата районта удобренисем хатĕрлесе хире кăлармалли вунăкунлăх иртерме йышăнчĕ.

«Самолет» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен сăмахне пурнăçлассишĕн тимлĕ кĕрешеççĕ. Смирнов, Сорокин, Григорьев тата ытти комсомолецсем кашни кун хĕрÿллĕ ĕçе хутшăнаççĕ. Хастарлă çамрăксем хире удобренисем кăларнипе пĕрлех колхоза çуракине ытти енчен те хатĕрленсе çитме пулăшаççĕ.

Я. СИГАЙ.

Ленинпа Сталин парти çинчен вĕрентнин аслă вăйĕ

(И. В. Сталин 1937 çулта ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти-мартри Пленумĕнче доклад тунăранпа вунпилĕк çул çитнĕ май)

Большевизм никĕсне хывакан аслă çулпуçсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин большевиксен партине революциллĕ кĕрешӳ партийĕ пулма воспитани парса çитĕнтернĕ. Вĕсем партие чи малта тăракан теорипе, программăпа тата тактикăпа хĕçпăшаллантарнă, рабочи класс тăшманĕсене хирĕç пынă хаяр кĕрешӳсенче пиçĕхтерсе, партие пĕтĕм тĕнче историйĕнчи паллă çĕнтерӳсем патне илсе çитернĕ.

Большевиксен партийĕн вăйĕ—унăн программа, тактика тата организаци принципĕсем пĕрлĕхлĕ пулнинче. Пирĕн парти хăйĕн вĕçне çитнĕ революциллĕ теорийĕпе, программипе, хăйĕн тактикипе кăна мар, тата хăйĕн организацийĕпе те рабочи класăн малти отрячĕн ĕçне туса пырать. Ленинпа Сталин партие организаци тĕлĕшĕнчен çирĕплетес ĕç çине ялан çав тери тимлĕ пăхнă, вĕсем никçан арканми организациллĕ принципсем туса панă, çав принципсен хăватлă вăйне пирĕн партин тата тĕнчери пĕтĕм коммунизмла юхăмăн нумай çулхи мухтавлă ĕçĕсенче тĕрĕсленĕ.

Ленинăн вилĕмсĕр ĕçне малалла илсе пыракан аслă çулпуç Сталин юлташ Ленин парти çинчен вĕрентнине пур енĕпе те малалла аталантарчĕ, большевизмăн организациллĕ наукипе малалла ячĕ, партие пирĕн çĕршывра социализм тăвас историллĕ задачăна ăнăçлă пурнăçа кĕртме пĕтĕçтерчĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе большевиксен партийĕ совет халăхĕн чи усал тăшманĕсене—ют çĕршыв разведкисен агентури, шпионсен, çынвĕлерексен, сăтăрçăсен вăрă-хурахла ушкăнĕ пулса тăнă троцкистла-бухаринла сутăнчăксене çапса аркатрĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе большевиксен партийĕ тата та тачăрах пĕрлешнĕ, çирĕп пĕтĕçнĕ парти пулса тăчĕ, çавна пула коммунизмшăн пыракан кĕрешӳре вăл совет халăхне çул кăтартса, ăнăçлăн ертсе пырать.

Ленин парти çинчен вĕрентнине малалла аталантарас тĕлĕшпе, партин хăйĕн речĕсене малалла çирĕплетессишĕн кĕрешес пултарулăхне ӳстерес тĕлĕшпе Сталин юлташ 1937 çулта ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти-мартри Пленумĕнче «Партиллĕ ĕçĕн çитменлĕхĕсем, троцкистла тата ытти тăшмансене пĕтермелли мерăсем çинчен» тунă доклад питех те пысăк вырăнта тăнă.

Сталин юлташ ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти-мартри Пленумĕнче тунă докладра тата юлашкинчен каланă сăмахра партине совет органĕсене çирĕплетмелли усăллă программа, политикăллă сыхăлăха ӳстерме кирлĕ ĕçсен программине кăтартса пачĕ, «большевизма вĕренсе алла илес» лозунг кăларса тăратрĕ. Сталин юлташ докладĕпе юлашкинчен каланă сăмах творчествăллă марксизм-ленинизм пуянлăхне кĕрекен хаклă произведенисем пулса тăраççĕ.

Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче троцкистла тата ытти тăшмансен тискер ĕçĕсене кăтартса пачĕ, вĕсем диверсантсен, шпионсен, çын вĕлерекенсен идейăсăр гăрă-хурахла ушкăнĕ пулса тăнине, империалистла разведкăсене сутăннă ирсĕрсем, мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисен ылханлă тăшманĕсем пулса тăнине пĕтĕм тĕнче умĕнче тăрă шыв çине кăларчĕ.

Çак докладра Сталин юлташ парти организацийĕсен ĕçĕнче пулнă çитменлĕхсене большевикла тӳрĕлĕхпе кăтартса парса, партипе Совет государствине ертсе пыракан кадрсен идейăпа теори тĕлĕшĕнчи шайне ӳстерес задача кăларса тăратрĕ. Докладра партин шалти ĕçĕсен чи кирлĕ ыйтăвĕсене çав тери тарăн сутатса панă, историри çĕнĕ условисенчи партиллĕ-политикăллă ĕçсен задачисене кăтартса панă.

Сталин юлташăн произведенийĕ партин хăватлă идейăллă хĕçпăшалĕ пулчĕ, вăл пулăшнипе троцкизма пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă, ăна пĕтĕм тĕнчипех тăрă шыв çине кăларнă.

Сталин юлташ 1937 çулта ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти-мартри Пленумĕнче тунă докладпа юлашкинчен каланă сăмах пĕтĕм тĕнчешĕн питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем коммунистсен партийĕсемпе рабочи партисене, миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешекен мĕнпур çынсене хăйсен буржуазине хирĕç, Америкăпа Англи империалисчĕсене хирĕç кĕрешме хĕçпăшаллантарнă, халĕ те хĕçпăшаллантарса пыраççĕ.

Сталин юлташăн генилле произведенийĕ совет халăхне ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарать, ĕçсыннисене коммунизм туса çитерессишĕн пыракан кĕрешӳре большевикла сыхă пулма вĕрентет.

I.

ЦК ВКП(б) Пленумĕ совет çĕршывĕн хуçалăхĕпе культури хăватлă çĕкленнĕ тапхăрта пухăннă. 1937 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне (4 çул та 3 уйăхра) промышленность иккĕмĕш пилĕк çуллăх планне ăнăçлă тултарнă. Ку ĕнтĕ социализмăн çав тери пысăк çĕнтерĕвĕ пулнă. 1937 çулта мĕнпур хресчен хуçалăхĕсен 93 процентчĕ колхозсене пĕрлешнĕ, вĕсем акса тăракан çĕр лаптăкĕ мĕнпур хресченсен çĕр лаптăкĕн 99,1 процентчĕ чухлĕ пулнă. Ялхуçалăхне коллективизацилес ĕçе туса çитернĕ.

Халăх хуçалăхне сталинла реконструкцилес политика кӳнĕ ырлăхсем çакăнтан та уççăнах курăнса тăнă: Совет Союзĕн промышленноçĕ иккĕмĕш пилĕкçуллăхра, 1929 çулхипе танлаштарсан, 4 хут ытла, вăрçăчченхи шайпа танлаштарсан, сакăр хут ытла ӳснĕ.

Стахановла юхăм аталанса пыни тата иккĕмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарни ĕçсыннисен пурнăçне çĕнĕрен лайăхлатма кирлĕ условисем туса панă.

Çав вăхăтрах капитализмлă çĕршывсен промышленноçĕ 1937 çулта, 1929 çулхи шайпа танлаштарсан, 95—96 процента кăна çитнĕ, 1939 çулăн иккĕмĕш сур çулĕнче вăл çĕнĕ экономика кризисĕн тапхăрне кĕнĕ. Çакă вара пролетариатпа буржуази хушшинчи, çавнашкалах империалистла çĕршывсем хушшинчи хирĕçӳсене татах та çивĕчлетсе янă. Агрессиллĕ государствăсем ССР Союзне хирĕç юнлă вăрçă пуçлас хăрушлăх ӳснĕ.

Империалистла разведкăсем пирĕн çĕршыва лазутчиксене ярассине вăйлатнă, вĕсем вара хăйсен преступникла ĕçĕсене тума троцкистла-зиновьевла ирсĕрсемпе пур майсемпе те усă курма тăрăшнă. 1937 çулта бухаринла-троцкистла вăрă-хурахла ирсĕр ушкăнăн çĕнĕ киревсĕр ĕçĕсем çинчен пĕлнĕ. Суд процесĕсем бухаринецсемпе троцкистсем тахçанах халăх тăшманĕсен вăрă-хурахла пĕр—ушкăнĕнче тăнине кăтартса пачĕç. Этем йăхĕн каяшĕсем—Троцкий, Зиновьев, Каменев—Октябрьти социализмлă революцин малтанхи кунĕсенчех Ленина хирĕç, партие хирĕç, Совет государствине хирĕç кĕрешме каласса тапăннă, кавар тунă. Троцкистла-бухаринла йĕрĕхсем, хăйсен хуçисем—ют çĕршывсен буржуалла разведкисем хушнине пурнăçа кĕртсе, партипе Совет государствине аркатма, çĕршыв оборонине хавшатма, ют çĕршывсен интервенцине çăмăллатма, Совет Çарне вăрçăра çĕмĕрсе тăкас ĕçе хатĕрлеме, ССР Союзне пайлама, ăна империализм колонийĕ тума, ССР Союзĕнче капитализм чуралăхĕ туса хума шутланă.

Сталин юлташ ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Пленумĕнче тунă докладра троцкистла-бухаринла ирсĕрсем пĕтĕмĕшпех тăшмана сутăннине кăтартса панă. Сталин юлташ çапла каланă: троцкистсем тахçанах ĕнтĕ, Совет государствипе совет влаçне мĕнле те пулсан сиен тăвас тесе, шпионаж тата Тăван çĕршыва тӳрех сутас тарапах кирек мĕнле йĕрĕнчĕке те, кирек мĕнле ирсĕре те тиркемен мăн çул çинчи вăрă-хурахсем пулса кайнă. Сталин юлташ партипе совет халăхне троцкистла-бухаринла тата буржуалла-националистла сутăнчăксен йăвисене пĕтĕмĕшпех пĕтерме мобилизацилерĕ.

Сталин юлташ ертсе пынипе парти Тăван çĕршыва сутакан троцкистла-бухаринла тата буржуалла-националистла вăрă-хурахсене, тĕнчери империализм агенчĕсене, капитализма каялла таврăрма хăтланакансене пĕтĕмĕшпех çапса аркатрĕ. Пролетариат диктатурин çирĕп алли совет халăхĕн çак чи тискер тăшманĕсене нимĕн шеллемесĕр пĕтерсе хучĕ.

Сталин юлташ аслă ертсе пынипе тĕнчери иккĕмĕш вăрçă умĕн пирĕн çĕршывра «пиллĕкмĕш колоннăна» пĕтернĕ, çакă вара парти речĕсен пĕрлĕхĕпе çирĕплĕхне, пĕтĕм совет халăхĕн моралĕ-политикăллă пĕрлĕхне тата ытларах тĕрекдетрĕ.

II.

Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче большевиксен партийĕ троцкистла тата ытти сутăнчăксене çĕмĕрсе тăкса, кăкласа ывăтассишĕн нумай вăхăт хушши кĕрешнине кăтартса пачĕ. Çапах та партири юлташсем нумайăшĕ политика тĕлĕшĕнчен тимсĕр те йăваш чуллă пулнине палăртса, Сталин юлташ çав явленисен сăлтавне тарăн уçса пачĕ, класс тăшманĕ тĕлĕшĕнчен тимсĕр те суккăр пулни тĕнчери тата шалти пурнăçăн мĕнле фактoрĕсене манса кайнинчен тухса тăнине кăтартса пачĕ.

Ĕç акă мĕнре,—тесе кăтартса пачĕ Сталин юлташ,—пирĕн партири юлташсем, хуçалăх кампанийĕсемпе тата хуçалăх строительствин фронтĕнче калама çук пысăк çитĕнӳсем тунипе хавхаланса, большевиксене манма юраман хăшпĕр питех те паха фактсем çинчен манса кайнă.

Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче политикăллă тимсĕрлĕх партин уйрăм руководителĕсем, хуçалăх ĕçĕсемпе хавхаланса, капитализмлă йĕритавралăх пурри çинчен манса кайнинчен килнине кăтартса пачĕ.

«Капитализмлă йĕритавралăх, — тесе вĕрентет Сталин юлташ,—вăл акă мĕне пĕлтерет: пĕр çĕршыв, Совет Союзĕ, пур, çак çĕршыв хăйĕн патĕнче социализмлă йĕркесем туса хунă, тата, унсăр пуçне, нумай çĕршывсем—буржуаллă çĕршывсем пур, вĕсем халĕ те капитализмлă йĕркепе пурăнаççĕ, вĕсем Совет Союзĕ тавра тăраççĕ, ун çине тапăнма, ăна çĕмĕрсе тăкма е, мĕнле пулсан та—унăн вăй-хăватне хавшатма, ăна вăйсăрлатма вăхăт килсе тухасса кĕтсе тăраççĕ.

Çак тĕп факт çинчен пирĕн юлташсем манса кайнă. Шăпах çав факт ĕнтĕ капитализмлă йĕритавралăхпа Совет Союзĕ хушшинчи хутшăнусен никĕсне палăртса парать те» («Партиллĕ ĕçĕн çитменлĕхĕсем, троцкистла тата ытти двурушниксене пĕтермелли мерăсем çинчен». Партиздат, 1937 çул, 9 стр.).

Капитализмлă йĕритавралăха, — тет Сталин юлташ,—географилле ахаль ăнлану тесе шутламалла мар. Сталин юлташ партие, совет халăхне, халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисене çапла вĕрентет: агрессиллĕ империалистла государствăсем пур чухне вĕсем социализм лагерьне ялан хах сăтăрçăсем, шпионсем, диверсантсем, çын вĕлерекенсем ярса тăрĕç.

Сталин юлташ капитализмлă йĕритавралăхăн хăрушлăхĕ çинчен аслă кăтартса пани пирĕн кунсенче калама çук пысăк вырăнта тăрать. Çакă вăл мирпе демократишĕн кĕрешекен мĕнпур çынсене мобилизацилет. Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă пула капитализм тĕнчи çĕнĕрен пысăк сиен курчĕ—Европăри чылай çĕршывсем унтан уйрăлса кайрĕç. Демократиллĕ Германи республики пулса тăчĕ. Хĕвелтухăçĕнче аслă Китай халăхĕ хăйĕн ĕмĕрхи пусмăрĕнчен ĕреке тухса, çĕнĕ пурнăç тума тытăнчĕ. Совет Союзĕ ертсе пыракан хăватлă демократиллĕ лагерь пулса тăчĕ. Çак фактсем тĕнчери вăйсене социализм майлă вырнаçтарса улăштарчĕç. Анчах капитализм лагерĕ ĕçсыннисене нумай инкек кăтартма пултарать-ха. Çавăнпа мĕнпур ĕçсыннисен те çав тери çирĕп пĕтĕçсе тата сыхă тăмалла.

Тĕнчери халăхи лару-тăру çакна кăтартса парать: социализмпа демократи вăйĕсем ӳснĕ май империалистсем ытларах та ытларах урса, тискерленсе пыраççĕ. США-ри, Англири тата ытти империалистла государствăсенчи ертсе пыракан ушкăнсем мире юратакан демократиллĕ çĕршывсене хирĕç тĕнчери çĕнĕ вăрçа уçсăнах хатĕрленеççĕ. Англипе Америка империалисчĕсем ССР Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç пыракан агрессиллĕ Çурçĕр-Атлантика блокĕ турĕç. Вĕсем Германипе Японие çĕнĕрен хĕçпăшаллантараççĕ, агрессиллĕ çарсем тăваççĕ.

Халăх тăшманĕсем ССР Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç сăтăрлă ĕçсем тувине тата диверси тунине Америкăпа Англи империалисчĕсем уççăнах хӳтĕлеççĕ. Вĕсем çав ирсĕр ĕçсене тума калама çук нумай укçа-тенкĕ параççĕ.

Тĕнчери правăпа государствăсем хушшинчи хутшăнусен пурне те палла нормисене тискеррĕн пăсса, США правительстви иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче «Пĕр-пĕрин хушшинче хăрушсăрлăх тăвасси çинчен 1951 çулта йышăннă закон» текенскерне йышăнчĕ. Çак закон тăрăх, США правительстви Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç диверси, шпионаж тата сăтăрла ĕçсем тума 100 миллион доллар уйăрса хунă.

Америкăпа Англи империалисчĕсем пулăшасса шанса, халăх демократи çĕршывĕсенчи сирпĕтсе антарнă эксплуататорла классем çав çĕршывсен территорийĕнче диверсисем организацилеççĕ, çынсене вĕлереççĕ.

Çак условисенче Сталин юлташ массăсене большевикла сыхă пулма воспитани парасси çинчен вĕрентни чăн-чăнах историллĕ пысăк вырăнта тăрать. Большевикла сыхăлăх халăх демократи çĕршывĕсенчи коммунистсен партийĕсемпе рабочи партисене халăх тăшманĕсен вăрă-хурахла ушкăнĕсене тăрă шыв çине кăларма пулăшрĕ. Венгрире Райкăн вăрă-хурахла ушкăнне, Румынире—Патрашкану ушкăнне, Чехословакире—Шлинг, Клементис, Сланский ушкăнне, Болгарире—Костов ушкăнне, Албанире—Кочи Дзодзе ушкăнне, Польшăра—Польша çарĕнчи буржуаллă националистсене тăрă шыв çине кăларнă.

Империалистла кавар тăвакансене çĕмĕрсе тăкни коммунистсен партийĕсемпе рабочи партисен революциллĕ сыхăлăхĕ ӳснине кăтартса парать, вăл мир ĕçĕн, пролетариллĕ интернационализмăн пысăк çĕнтерĕвĕ пулса тăрать.

В. И. Ленин çапла кăтартса панă: «...пĕтекен капитализм чуралăхне сыхласа хăварас тесе, буржуази темле тискер, ирсĕр тата преступникла ĕç тума та хатĕр» (Соч., 19 т., 77 стр.). Социализмлă государство пурлăхне сыхлама революциллĕ сыхăлăх кирлине палăртса, Сталин юлташ çапла калать:

«Ирсĕрлеме тата сиенлеме пĕртте çын нумай кирлĕ мар. Днепрострой тумашкăн ĕçе вуншар пин рабочи ямалла. Ăна сирпĕтсе яма темиçе вунă рабочи кирлĕ-и тен, унтан ытла мар. Вăрçă вăхăтĕнче çапăçура çĕнтерме красноармеецсем темиçе корпус кирлĕ пулма пултарать. Фронтра çав çĕнтерĕве пĕтерсе хума ăçта та пулсан арми штабĕнче е дивизи штабĕнче оперативлă плана вăрласа тăшмана пама пултаракан темиçе шпион пулни те çителĕклĕ. Пысăк чугун çул кĕперне тума темиçе пин çын кирлĕ. Анчах ăна сирпĕтсе яма темиçе çын та çителĕклĕ. Çавăн пек тĕслĕхсем вуншар та, çĕршер те илсе кăтартма пулать» (27 стр.).

Мирлĕ ĕçри совет çыннисем Америка империалисчĕсемпе вĕсен ирсĕр агентурин усал ĕçĕсене хытă асăрхаса тăраççĕ.

«Мирлĕ строительствăна вăйлатса пырса,—тесе вĕрентет Сталин юлташ,—пирĕн çĕнĕ вăрçă планĕсем хатĕрлекен тĕнчери реакцин усал ĕçĕсем çинчен пĕр минутлăха та манас пулмасть. Мирлĕ ĕçе куççан, ялан сыхă тăмалла, хамăр çĕршывăн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе оборона пултарулăхне куç шăрçине сыхланă пек сыхламалла, тесе аслă Ленин кăтартса панине асра тытас пулать» (ССР Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен Министрĕ 1946 çулхи майăн 1-мĕшĕнче кăларнă 7-мĕш №-лĕ приказ).

Большевиксен партийĕ пирĕн халăха, совет çамрăкĕсене большевикла сыхă пулма ывăнма пĕлмесĕр воспитани парать. Большевикла сыхăлăх—кашни совет патриочĕн чи паха енĕ. Сыхăлăх совет çыннисемшĕн производствăра та, килте те хăйсене тыткаламалли норма пулса тăмалла. Государствăпа производство вăрттăнлăхне çирĕп сыхласси—кашни ĕçсыннин гражданла тивĕçĕ. Совет çыннисен сыхă пулмалла, буржуалла национализм, космополитизм, буржуалла идеологи кирек мĕнле палăрсан та, пирĕн Тăван çĕршыв тăшманĕсем кирек мĕнле тум тумлансан та вĕсен усал ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса хăюллăн кĕрешмелле.

Большевикла сыхăлăха ӳстересси—парти организацийĕсен паха задачи.

III.

Докладра тата юлашкинчен каланă сăмахра Сталин юлташ, çитменлĕхсене сутатнă май, партин шалти ĕçĕн чи кирлĕ задачисене кăтартса пачĕ. Сталин юлташ çапла каларĕ: пирĕн партин политикăллă ĕçне тивĕçлĕ пусăма çĕклемелле, парти, совет тата хуçалăх кадрĕсене политикăна вĕрентес, большевикла пиçĕхтерес задачăна тĕп вырăна тăратмалла.

Сталин юлташ хуçалăх ĕçне, государство планĕсемпе заданийĕсене тултарас ĕçе массăсем хушшинчи политикăллă ĕçпе пĕлсе çыхăнтарса пыма кирлине кăтартса пачĕ. Хуçалăх ĕçĕпе политикăллă ĕçе тĕрĕс çыхăнтарса пыни коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тума май парать.

Сталин юлташ çапла кăтартса пачĕ: хуçалăхри çитĕнӳсемпе сыхăнса тăракан тĕксĕм енсене—ăпăлласа ларнине, тимсĕрлĕхе, политикăллă туйăм мăкалнине—хуçалăхри çитĕнӳсене парти строительствинчи çитĕнӳсемпе, пирĕн партин политикăллă ĕçне вăйлатса янипе çыхăнтарса пырсан çеç пĕтерме пулать.

Хăйсен пĕтĕм вăйне хуçалăх ыйтăвĕсене парса, ытти çинчен пурин çинчен те манса каякан руководительсене хытă критикăласа, Сталин юлташ çапла каларĕ: хуçалăх кампанийĕсене иртерес енĕпе тата хуçалăхра çитĕнӳсем тăвассишĕн кăна ытларах ĕçлени, партипе политика ыйтăвĕсене хакламасăр манса хăварни тупике илсе кĕрет.

Сталин юлташ çакна палăртрĕ: «Хуçалăхри çитĕнӳсем хăйсем те, вĕсем çирĕп пулассп те, вĕсем нумай вăхăта пырасси те пĕтĕмпех партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçĕн çитĕнĕвĕсенчен килет, çав условисĕр хуçалăхри çитĕнӳсем çирĕп пулмаççĕ, хăйăр çинче тунă пек çеç пулма пултараççĕ» (20 стр.).

Сталин юлташ хуçалăх ĕçĕпе партиллĕ-политикăллă ĕçе тĕрĕс çыхăнтарса пымалли çинчен кăтартса пани пирĕн партии ĕçĕнче, халăх демократи çĕршывĕсенчи коммунистсен партийĕсемпе рабочи партисен ĕçĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хуçалăха ертсе пырас ĕçе хăйсем çине, парти организацийĕсем çине илсе, государствăпа хуçалăх органĕсем вырăнне ĕçлекен юлташсем тĕрĕс мар тăваççĕ. Хуçалăх органĕсене ертсе пырас меслет, тесе ăнлантарать Сталин юлташ, шăпах ĕнтĕ «хуçалăха çав органсемсĕр мар, çав органсем урлă ертсе пынинче пулать» (32 стр.). Хуçалăха политикăран уйăрса, е пĕр ыйтăвне, е тепĕр ыйтăвне ытларах хисеплекенсем те тĕрĕс тумаççĕ, мĕншĕн тесен «ĕçре политикăпа хуçалăха пĕр-пĕринчен уйăрма çук» (32 стр.).

Çĕнтерӳллĕ социализм условийĕсенче партиллĕ ĕçĕн пĕтĕмĕшле ĕçĕсене классикăлла палăртса пани большевиксен партийĕн нумай енлĕ ĕçĕнче çул кăтартакан çăлтăр пулса тăрать.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ хăйĕн постановленийĕсенче хуçалăха ертсе пырас ыйтусене массăсем хушшинче политикăллă ĕçе вăйлатнипе пĕлсе çыхăнтарса пырасси çинчен темиçе хут та кăтартса пачĕ. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çак постановленисенче парти организацийĕсене политикăллă ĕçе татăклăнах вăйлатма хушса, массăсене коммунизмла воспитани парас ĕçе лайăхлатма кирлине кăтартса пачĕ.

Сталин юлташ ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Пленумĕнче тухса каланă сăмахсенче парти, совет тата хуçалăх органĕсен ертсе пыракан кадрĕсен идейăпа теори шайне татăклăнах хăпартас задача партин чи кирлĕ задачи пулнине палăртрĕ.

«Эпир пирĕн парти кадрĕсене,—тет Сталин юлташ,—аялтан пуçласа çӳле çитиччĕнех, шалти тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва çăмăллăх ăнланма пултарас таран идеологи тĕлĕшĕнчен хатĕрлеме тата политика тĕлĕшĕнчен пиçĕхтерме пултарсан, эпир вĕсене пысăк йăнăшсем тумасăрах çĕршыва ертсе пыма пултаракан пĕтĕмĕшпех пулса çитнĕ ленинецсем, марксистсем тума пултарсан, вара эпир хамăрăн мĕнпур задачăсен вунă пайĕнчен тăххăршне татса панă пулăттăмăр, тесе шутлатăп эпĕ» (28 стр.).

Сталин юлташăн çак кăтартăвне пурнăçа кĕртсе, большевиксен партийĕ ертсе пыракан кадрсен идейăллă шайне ӳстерес тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕç туса иртерчĕ, вĕсене пĕрмаях марксизм-ленинизм теорийĕн тарăн пĕлĕвĕсемпе хĕçпăшаллантарса пырать. ВКП(б) историйĕн кĕске курсне—большевизмăн тĕп пĕлĕвĕсен энциклопедине пичетлесе кăларнă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче парти обществăллă наукăсен академине, Партин аслă шкулне уçрĕ, облаçсенче, крайсенче тата республикăсенче икĕ çул вĕренмелли парти шкулĕсем нумай организацилерĕ. Миллионшар коммунистсемпе партире тăман работниксем революциллĕ теорин никĕсĕсене кружоксенче, шкулсенче, семинарсенче тата хăйсем тĕллĕн вĕренеççĕ. В. И. Ленин çырнă вилĕмсĕр произведенисен тăваттăмĕш изданийĕ тухрĕ. Сталин юлташăн Сочиненийĕсем тухаççĕ. Ленинпа Сталин произведенийĕсем пирĕн кадрсене политика тĕлĕшпе ӳсме пулăшакан, вĕсене большевикла çирĕплĕх паракан хăватлă идейăллă хĕçпăшал пулса тăраççĕ.

Юлашкинчен каланă сăмахра Сталин юлташ большевикла ертсе пырас ыйтусене пысăк вырăна лартать.

Сталин юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла кăтартса парать: пирĕн çĕршывăн социализмлă хуçалăхне ертсе пыма кадрсем политикăпа идея тĕлĕшĕнчен çирĕп пулни, пур пĕлӳсене те тарăн пĕлни тата ĕçри опыт кирлĕ. Ĕçе пĕлмесĕр ертсе пыма май çук. Мĕнле ĕçре ĕçлени (чин) хăй кăна, тет Сталин юлташ, пĕлӳ те, опыт та памасть. Вĕренсе тухнă чухне илнĕ ят хăй кăна—пушшех те.

«Тĕрĕс ертсе пырасси,—тесе вĕрентет Сталин юлташ,—вăл çакна пĕлтерет:

пĕрремĕшĕнчен, ыйтăвăн тĕрĕс решенине тупмалла, анчах эпир ертсе пынин результачĕсене хăйсен çурăмĕ çинче сăнакан массăсен опытне шута илмесĕр, тĕрĕс решени тупма май çук;

иккĕмĕшĕнчен, тĕрĕс решение пурнăçа кĕртес ĕçе организацилемелле, анчах ăна массăсем тӳрех пулăшмасăр тума çук;

виççĕмĕшĕнчен, çав решение пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслес ĕçе организацилемелле, ăна та массăсем тӳрех пулăшмасăр тума çук» (41 стр.).

Аслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр кăтартса панисем пирĕн çĕршывра коммунизм тунă условисенче парти вăйчен ертсе пырассине лайăхлатас тĕлĕшпе калама çук пысăк вырăнта тăраççĕ.

Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче кадрсене суйласа илсе вырнаçтарса тухас ĕçĕн наукăллă принципĕсем çинчен калать, политикăллă принципсемпе ĕçлĕ принципсене çыхăнтарма кирлине, кадрсене вырнаçтарса тухнă чухне критикăпа самокритикăна аталанма чаракан çемьелĕх пулмалла маррине кăтартса парать. Сталин юлташ работниксене вĕсен сăмахĕсемпе декларацийĕсем тăрăх мар, вĕсен ĕçĕн результачĕсем тăрăх тĕрĕслеме хушать.

Кадрсене сӳлтен кăна тĕрĕслеме пулать, тесе айванла шухăшлакан работниксене Сталин юлташ хытă критикăларĕ. Сталин юлташ работниксене тата тепĕр тĕрлĕ тĕрĕслени не,—аялтан тĕрĕслени не, массăсем хăйсен руководителĕсене тĕрĕслесе, вĕсен йăнăшĕсене кăтартнине, çав йăнăшсене юсамалли çулсене палăртнине кăтартса пачĕ. Çӳлтен тĕрĕслени не аялтан тĕрĕслени пе пĕрлештермелле, терĕ Сталин юлташ.

«Эпир, ертсе пыракансем, япаласене, пулса пыракан событисене, çынсене, эпĕ калăттăм—пĕр енчен, çӳлтен кăна куратпăр, апла пулсан, эпир курма пултарнин тавралăхĕ хĕсĕкрех. Массăсем, пачах урăхла, япаласене, пулса пыракан событисене, çынсене, эпĕ калăттăм—тепĕр енчен, аялтан кураççĕ, апла пулсан, вĕсем курма пултарнă тавралăх та паллă таран хĕсĕкрех. Ыйтăвăн тĕрĕс решенине тупмашкăн çав икĕ опыта пĕрлештермелле. Çавăн пек тусан кăна тĕрĕс ертсе пыма пулать» (41 стр.).

Уйрăм работниксем парти строительствипе хуçалăх строительствинче тунă йăнăшсене кăтартса, Сталин юлташ докладра большевикла кадрсене вĕрентсе ӳстермелли анлă программа пачĕ, «уçă та тӳрĕ кăмăллă самокритика обстановкинче кăна чăн-чăн большевикла кадрсене вĕрентсе ӳстерме, чăн-чăн большевикла лидерсене вĕрентсе ӳстерме пулать»,— терĕ (38 стр.).

Сталин юлташ пирĕн кадрсене тунă çитĕнӳсемпе киленсе ларма мар, ĕçре хăйсенчен ялан ытларах ыйтма вĕрентет. Социализм строительствинчи пысăк та паха çитĕнӳсен обстановкинче, тесе кăтартса парать Сталин юлташ, мухтанас кăмăл çуралать, пирĕн çитĕнӳсене парадлă манифестацисем туса кăтартас кăмăл, пирĕн тăшмансен вăйĕсене çителĕклĕ хак паман кăмăл, хамăр вăйсене ытлашши хак парас кăмăл çуралать, çаксем вара политикăллă суккăрлăх патне илсе пыраççĕ.

Большевиксен партийĕ пирĕн кадрсене хăйсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăюллăн палăртма вĕрентет. Парти хăйĕн пур организацийĕсене те большевикла критикăпа самокритикăна хăюллăн сарса пыма хушать, критикăпа самокритикăна ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелли чи лайăх меслет, массăсене коммунизмла воспитани памалли хăватлă хĕçпăшал тесе шутлать.

Сталин юлташ хăйĕн сăмахĕнче кадрсемшĕн, çынсемшĕн тăрăшма кирлине уйрăмах хытă палăртрĕ. Совет çыннисене—коммунизмăн активлă строителĕсене мĕн кирли, вĕсем мĕн ыйтни çине сӳрĕккĕн пăхнине пирĕн обществăра татăклăнах сивлес пулать.

Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче çапла кăтартса пачĕ: большевиксен партийĕн, çĕнĕ сăнарлă партин, ленинизм партийĕн вăйĕ—вăл массăсемпе уйрăлми сыхăнса тăнинче. Парти массăсене вĕрентет кăна мар, вăл хăй те вĕсенчен вĕренет. Массăсемпе уйрăлми çыхăну тытни, çав çыхăнăва çирĕплетсе пыни, халăх шухăшкăмăлне итлеме ялан хатĕр пулни—çакă ĕнтĕ коммунистсен партийĕн вăйĕ.

«Большевиксем пире грексен мифологи геройне Антее аса илтереççĕ, тесе шутлатăп эпĕ,—терĕ Сталин юлташ.— Вĕсем те, Антей пекех, хăйсен амăшĕпе, вĕсене çуратнă, тăрантарса пăхса ӳстернĕ массăсемпе çыхăну тытнипе вăйлă. Вĕсем хăйсен амăшĕпе, халăхпа, çыхăну тытнă чух вĕсен никам çĕнтерейми пулса юлма пур шанчăк та пур» (43—44 стр.).

Вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăхра большевиксен партийĕпе совет халăхĕ хушшинчи çыхăну çав тери вăйлă пулни нумай тĕслĕхсенчен курăнчĕ. Совет халăхĕ хăйĕн тăван партине—шанчăклă та аслă çулпуç, пирĕн тĕнчипе паллă историллĕ çĕнтерӳсене хавхалантаракан тата организацилекенĕ тесе шутлать. Совет халăхĕ Ленин—Сталин партине—пирĕн Тăван çĕршыва малалла, коммунизм патне илсе пыракана—чунтан-чĕререн юратса, вĕçĕмсĕр шанса тăрать.

Сталин юлташ ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти-мартри Пленумĕнче тунă докладпа юлашкинчен каланă сăмах парти çинчен, вăл коммунизм строительствине организацилесе тата хавхалантарса пыракан вăй пулса тăни çинчен калакан ленинла-сталинла вĕрентĕвĕн хаклă произведенийĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем пирĕн ертсе пыракан кадрсене большевикла ертсе пырас искусствăпа, политикăллă ĕçе хуçалăх ĕçĕпе тĕрĕс çыхăнтарса пырас ăсталăха вĕрентеççĕ.

Сталин юлташ докладĕ пирĕн партие, кашни коммуниста, кашни совет патриотне хăйĕн революциллĕ сыхăлăхне, хăйсен ĕçри хастарлăхне ӳстерме кирли çинчен вĕрентет, вăл коммунизм тăвакан совет халăхне Ленин—Сталин ĕçĕ çĕнтерес хĕрӳ шанчăкпа хĕçпăшаллантарать.

М. ГАРКУШЕНКО.

Февралĕн 15-мĕшĕ

Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли стахановла уйăхлăх

Мартăн 15-мĕшĕ

Етĕрне вăрман пунктĕнчен килнĕ çырусем

Уйăхлăха пур колхозсем те хутшăнма тивĕç

Етĕрне вăрман пункчĕ кăçалхи январь уйăхĕнчи заданне чылай иртсе тултарчĕ. Стахановла уйăхлăха хутшăнса, рабочисем пысăк обязательствăсем илчĕç. П. Медведев, Н. Тимофеев, М. Семенов, М. Кузьмин тата ытти рабочисем ĕç нормине куллен 130 процентран кая мар тултарма сăмах пачĕç. Вĕсем хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçлаççĕ, ĕç нормине куллен чылай иртсе тултараççĕ.

Уйăхлăх пуçланиччен вăрманта 15—20 колхозник çеç ĕçленĕ пулсан, халашки вăхăтра 90—100 çын таран ĕçлеççĕ. Чылай колхозниксем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз йывăç турттармалли плана уйăхлăх пуçланнă тĕле 105 процент тултарчĕ. Çак колхозран килнĕ лавçăсем, уйăхлăха хутшăнса, сезонти плана 115 процент тултарма пулчĕç. Халĕ вĕсем панă сăмаха чыслăн пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ. «Большевик», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенчен пынă лавçăсем те ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыраççĕ.

Анчах хăшпĕр колхоз руководителĕсем государство заданне тултарассишĕн çине тăрса кĕрешмеççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ П. Григорьев юлташ колхозниксене вăрмана ячĕшĕн кăна ярать. Колхозниксем вăрмана 11—12 сехетре тин çитеççĕ, кăнтăрла иртсен виçтăват сехетре киле таврăнаççĕ. Колхозниксене ертсе пыма правлени ответлă çынсем уйăрман. Кашни кун 10—12 километр киле çÿресе, вĕсем хаклă вăхăта сая яраççĕ. Вĕсем кÿлсе килекен лашасем кунĕпех вăрманта ахаль тăраççĕ. Колхоз председателĕ Григорьев юлташ колхозниксем мĕнле ĕçленине интересленмест, вĕсем патĕнче пулмасть.

Уйăхлăх пуçланиччен «Красноармеец» колхозран куллен пилĕк-улттă лавпа ĕçленĕ. Халĕ ик-виç лавпа кăна ĕçлеççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозран 27 лав вырăнне 10 лавпа кăна ĕçлеççĕ. Жданов ячĕпе тăракан колхоз йывăç турттармалли плана çуррине те тултарман. Апла пулин те колхоз правленийĕ йывăç турттарма лавсем çителĕклĕ уйăрса ямасть.

Вăрман пункчĕ уйăхлăха иртерме тимлĕн хатĕрленчĕ. Йывăç касса турттарма пынă колхозниксем валли вăрман сывăхĕнчи ялсенче хваттерсем тупса хатĕрленĕ. Хваттерсене хутма вутă уйăрса панă. Вăрман пунктĕнче столовăй ĕçлет. Апат-çимĕç, ĕç хатĕрĕсем çителĕклĕ. Вăрманта ĕçлеме кирлĕ мĕнпур условисене туса панă.

П. КОРОЛЬКОВ,
вăрман пункчĕн начальникĕ.

Илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн

Пирĕн колхозăн кăçал çĕршыва иртнĕ çулхисенчен чылай ытларах йывăç хатĕрлесе памалла. Стахановла уйăхлăх иртересси çинчен сÿтсе явнă пухура колхозниксем вăрман хатĕрлев планне мартăн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма, планран иртерсе 100 фестметр йывăç хатĕрлеме обязательство йышăнчĕç. Панă сăмаха пурнăçлас тесе, вăрманта ĕçлеме пултаруллă колхозниксене уйăртăмăр, лавçăсем çумне лайăх лашасене çирĕплетрĕмĕр. Колхозран 20 çын çуран, 15 лаша ĕçлет. Бригадăсене ертсе пыма ответлă çынсем уйăрнă. Бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхоз правленийĕ колхозниксем мĕнле ĕçленине тăтăш тĕрĕслесе тăрать, ĕçри çитменлĕхсене палăртса, çийĕнчех пĕтерме пулăшать.

Колхозниксем ĕçе ирех тухса çĕрлеччене ĕçлеççĕ. Пĕрисем йывăççене касса йăвантараççĕ, теприсем—туратсене иртеççĕ, виççĕмĕшĕсем—çурса купалаççĕ. Ĕçе çапла йĕркелени ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ÿстерсе пыма май парчĕ.

Эпир илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçлассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлетпĕр.

С. ТОКАРЕВ,
Мичурин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Партиллĕ-политикăллă ĕç

Вăрман пунктĕнчи пуçламăш парторганизаци рабочисемпе колхозниксем хушшинчи массăллă ĕçе лайăхлатса пырать. Агитаторсем докладсемпе калаçусем час-часах иртереççĕ, малта пыракансен опытне анлăн сараççĕ. Уйăхлăх вăхăтĕнче партиллĕ-массăллă ĕç вăйланчĕ. Докладсемпе калаçусем иртерме агитаторсем çĕнĕрен уйăрса çирĕплетнĕ. Вĕсем калаçусем иртереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ, тĕнчери лару-тăрăвсемпе паллаштараççĕ.

Парторганизаципе рабочком рабочисен пухăвĕсене час-часах иртереççĕ. Пухусенче докладсем пулаççĕ, вăрман мастерĕсен паха опычĕсемпе паллаштараççĕ. Çаксем ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшаççĕ.

Нумаях пулмасть рабочисене стахановла уйăхлăхăн тĕллевĕсем çинчен калаçса ăнлантартăмăр. Рабочисем уйăхлăха активлă хутшăнма пулчĕç, пысăк обязательствăсем илчĕç. Кадрти рабочисене сакăр бригадăна уйăрнă. Вĕсем пурте социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Ăмăртса ĕçлесе, илнĕ обязательствăна пурнăçласа пыраççĕ.

Малта пыракансен опытне сарса пырас майпа, колхоз председателĕсене, йывăç хатĕрлекен бригадăсен бригадирĕсене час-часах пуха калаçатпăр, вĕсене ĕçе лайăх организациленĕ колхозсенчи бригадăсен опычĕсемпе паллаштаратпăр, çитменлĕхсене пĕтермелли майсем кăтартса паратпăр.

Партиллĕ-массăллă ĕçе Сталин юлташ патне янă çырура йышăннă обязательствăна пурнăçлас ĕçпе çыхăнтаратпăр. ВКП(б) Етĕрне райкомĕн пуçламăш парторганизацие ытларах пулăшмалла. Вăл пирĕн ĕçе сахал интересленет. Сезон пуçланнăранпа вăрманта ĕçлекенсем хушшинче райком работникĕсем икĕ доклад çеç тунă. ВКП(б) райкомĕн вăрман пунктне лекторсемпе докладчиксем ытларах ямалла.

В. СПИРИДОНОВ,
вăрман пунктĕнчи пуçламăш парторганизаци секретарĕ.

Ĕç тухăçлăхĕ ÿсет

Стахановла уйăхлăх пуçлансан мана правлени йывăç турттаракансен бригадине ертсе пыма уйăрчĕ. Ку тараччен йывăç турттаракансен ĕçне тĕрĕс организацилемен пулнă. Лавçăсем час-часах улшăнса тăнă, ĕçе ир тухман, лавсене пĕчĕккĕ тиенĕ, ĕçе уйăммăн тума тăрăшман. Çаксем ĕç тухăçлăхне хăпартма чăрмантарнине эпир пурте ăнлантăмăр. Уйăхлăх малтанхи кунĕнчех вăрман турттарма пултаруллă колхозниксене уйăрса çирĕплетрĕмĕр. Вĕсене бригадăсене уйăртăмăр. Кашни бригада валли йывăç турттарма куллĕнхи график тунă. Бригадăсем графика иртерсе тултарассишĕн ăмăрту пуçарса ячĕç.

Халĕ ĕç малтанхи пек пĕчченшерĕн мар, ушкăнпа тăваççĕ. Кашни лава икĕ-виçшерĕн тиесе çыхаççĕ, çул çинче те пĕр-пĕрне пулăшаççĕ. Вырăна çитсен те лавсене ик-виçшерĕн пушататпăр. Çапла туни, пĕр енчен, лавçăсен ĕçне çăмăллатрĕ, тепĕр енчен, ĕç тухăçлăхĕ ÿсрĕ.

Йывăç турттарас ĕçĕн ăнăçлăхĕ лашасенчен нумай килет. Конюхсемпе лавçăсем лашасене лайăх пăхаççĕ. Колхоз правленийĕ лашасене тăрантарма фураж çителĕклĕ уйăрса пачĕ. Лавçăсем çул çинче лашасене ытлашши хăваламаççĕ, вăрахăн çÿреççĕ. Кирлĕ çĕрте вĕсене пулăшаççĕ, час-часах кантараççĕ, апат çитереççĕ. Халĕ лавсем çине малтанхинчен ытларах тиетпĕр пулин те лашасем ывăнмаççĕ. Уйăхлăх пуçланнăранпа пирĕн колхозран 15 лав ĕçлет. Ĕç тухăçлăхĕ пĕрмаях ÿсет. Малтанхи кун 17 кубометр йывăç турттарнă пулсан, халĕ çав лашасемпех 20—23 кубометр йывăç турттаратпăр.

П. ТОЛСТОВ,
«Большевик» колхоз председателĕн заместителĕ.

Планран иртерсе турттаратпăр

Пирĕн колхозран вăрман пунктне йывăç турттарма килнĕ лавçăсем хастарлăн ĕçлеççĕ. Уйăхлăх пуçланнă тĕле эпир йывăç турттармалли плана 105 процент тултартăмăр. Уйăхлăха хутшăнса, плана 115 процент тултарма обязательство илтĕмĕр. Илнĕ обязательствăна пурнăçласа пыратпăр. Плана тултарнă хыççăн пĕр лавçă та киле таврăнмарĕ. Вĕсем пурте йывăç турттарма юлчĕç. Эпир строительство валли кирлĕ хулăм та вăрăм пĕренесем турттаратпăр. Ку ĕç çăмăл мар. Кĕске вăхăт хушшинче ку ĕçе хăнăхса çитрĕмĕр. Халĕ вĕсене çăмăллăнах пристане илсе çитеретпĕр.

М. ЧЕРНОВ,
Молотов ячĕпе тăракан колхоз лавçи.

Вăрман пунктĕнче

Тул çутăлса çитиччен çитрĕмĕр делянка çине. Кадрти рабочисем кĕреçесемпе юр чаваççĕ.

— Ĕç вырăнĕсем хатĕрлеççĕ,— пĕлтерчĕ мастер.

Кадрти рабочисенчен инçех те мар колхозниксем йывăç касаççĕ. Вĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ, ирхи çутă ÿкиччѐнех вăрмана çитеççĕ. Эпир Мичурин ячĕпе тăракан колхозран килнĕ колхозниксем патĕнче чарăнтăмăр. Каснă йывăçа çурса ваклакан икĕ колхозникăн ĕçĕ пире тĕлĕнтерчĕ. Пĕри колхоз правлени членĕ Г. Корольков, тепри И. Бочаров колхозник. Вĕсем иккĕшĕ те Аслă Отечественнăй вăрçăн йывăр похочĕсенче пиçнĕ çынсем, совет салтакĕ-гвардеец пулнăскерсем, вăрманта стахановла ĕçлеççĕ.

— Ĕнер иккĕн 12 кубометр вутă çурса купаларăмăр,— тет Г. Корольков юлташ.

Аслă вăрман иртен пуçласа каçченех кĕрлесе тăрать. Ирех кунта пăчкă, пуртă сасси, сулĕ те патвар йывăççем ÿкни илтĕнет.

Вăрмантан çиппе çапнă пек тÿрĕ те çатма пек тикĕс çул çине тухрăмăр. Пĕрене, вутă тиенĕ лавсем татти-сыпписĕр умлăн-хыçлăн иртеççĕ. Çул çине хулăм пĕренесем тиенĕ лавсем тухрĕç. Вĕсене икшер лашапа турттараççĕ. Кусем Молотов ячĕпе тăракан колхозран вăрман турттарма килнĕ çамрăксем. Вĕсем хыççăн Мичурин ячĕпе тăракан, «Большевик» колхозсенчен килнĕ лавсем пыраççĕ. Лашисене ăшшăн кантарса апатлантарнă хыççăн, вĕсем пристанелле çул тытрĕç.

Вăрман варринчи хÿтлĕхре клепка вартакансем ĕçлеççĕ. Тĕлĕнмелле алăсем: шăратса янă пек тикĕс те тан хăмасем вартаса купалаңă. Вĕсем ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ÿстерсе пыраççĕ. Клепка вартакансен бригади иртнĕ уйăхри задание 109 процент тултарнă. А. Григорьев, М. Петров, Н. Барбоськин, В. Овчинников юлташсем уйăхра 900—1000 тенкĕ ĕçлесе илеççĕ.

Вĕсем ĕçленĕ çĕре вăрман пункчĕн мастерĕ М. Данилов юлташ çитрĕ. Кашни хăмана тĕрĕслет. Кашнинне калаçать, вĕрентет. Ĕçре мĕнле чăрмавсем пурри çинчен ыйтса пĕлнĕ хыççăн, вăл касакансем патнелле утрĕ.

— Вутă пулин те, ÿркенмест. Пур çĕре те çитет, пурне те вĕрентет,— теççĕ ун çинчен вăрманта ĕçлекенсем. Вăл кадрти рабочисем патне те, колхозниксем патне те куллен çитме тăрăшать, ĕç тухăçлăхне хăпартмалли майсем тупса парать, ăмăртма вĕрентет.

Паян ĕçленине пĕрлех, ыранхи, малашнехи çинчен те шутлаççĕ рабочисем. Халĕ йывăç хатĕрлемелли танхăр. Часах ăна шыв тăрăх юхтармалла пулать. Çак ответлă ĕçе тума та кунта тимлĕн хатĕрленеççĕ. Кирлĕ чухлĕ канатсем, тачкăсемпе посилкăсем хатĕрленĕ. Вăрман пунктĕнчи тимĕрçĕ хĕрсех юлашки тачкăсене юсать.

Пур участоксенчи рабочисем те тухăçлă ĕçлеççĕ. Çапла ĕçлеме кунта мĕнпур майсене туса панă. Ĕçленĕ çĕре кулленех апат-çимĕçсем илсе килсе сутаççĕ. Ĕç хатĕрĕсене юсакансем рабочисемпе пĕрлех. Пăчкă-пуртă мăкалсан, часах хăйраса параççĕ. Вăрманта ĕçлекен кашни рабочи кунта хăйшĕн тăрăшнине туять.

Социализмлă ăмăртăва анлă сарни коллектива пысăк ÿсĕмсем тума май парать. Вĕсен ĕмĕчĕ—татах та тухăçлăрах ĕçлесси, Тăван çĕршыва йывăç ытларах та ытларах парасси. Уйăхлăха хутшăнса, кадрти рабочисем йывăç хатĕрлемелли уйăх планне икĕ эрне хушшинче тултарма обязательство илнĕ. Вĕçен сăмахĕ çирĕп, ăна вĕсем чыслă пурнăçларĕç.

Н. ЦВЕТКОВ.

Çаракла вăрман пунктĕнче КТ-12 тракторпа пĕртăвансем Анатолипе Александр Жуковсем стахановла ĕçлеççĕ. Нормăпа сменăра 33 фестметр йывăç турттарса кăлармалла пулсан, вĕсем 50 фестметр таран турттараççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Анатолипе Александр Жуковсем трактор патĕнче.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Районти хаçат редакцийĕн отчетне итлĕнĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Çак кунсенче ВКП(б) райкомĕн бюровĕ хăйĕн черетлĕ ларăвĕнче районти «Çĕнтерÿ çулĕ» хаçат редакторĕн А. Шинжаев юлташăн отчетне итлерĕ. Хаçат редакцийĕ иртнĕ 1951 çулта районти ĕççыннисене коммунизмлă воспитани парас, вĕсене государство умĕнчи задачăсене пурнăçлама мобилизацилес тĕлĕшпе палăрмалла çитĕнÿсем турĕ. Хаçат иртнĕ çулхине ялхуçалăх ĕçĕсем çинчен ытларах çырнă. Ку тĕлĕшпе колхозсенчен килекен корреспонденцисене, ялхуçалăх специалисчĕсен статьисене пичетленĕ.

Хаçат редакцийĕн ĕçĕнче тунă çитĕнÿсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те пур. Редакци ялкорсен йышне ÿстерес тĕлĕшпе уйрăмах начар ĕçленĕ. Çавна пула редакци хăй умĕнче тăракан задачăсене тивĕçлипе çутатса пыраймасть. Хаçат страницисенче пуçламăш парторганизаци секретарĕсен, колхозсемпе ял Совет председателĕсен статьисене вăхăтран вăхăта кăна курма пулать.

Райхаçат редакцийĕ пĕлтĕр ялкорсемпе пĕр канашлу кăна ирттернĕ. Çавнашкалах редакци работникĕсем ялкорсене вăхăтра тивĕçлĕ кăтартусем парса пымаççĕ.

Редакци хаçат страницисенче малта пыракан колхозсемпе вырăнти промышленность предприятийĕсен, МТС-ри малта пыракан трактор бригадисен, вăрманпромхозĕнче ĕçлекен паллă рабочисен ĕç опычĕсемпе новаторсен ĕç меслечĕсем çинчен питех те сахал çырать. Çавнашкалах хаçат колхозсем организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен мĕнле çирĕплесе пынине, тырпул тухăçлăхне хăпартассипе выльăх-чĕрлĕх тупăшлăхне ÿстерессишĕн социализмлă ăмăрту мĕнле сарăлса пынине уçăн çырса кăтартмасть. Колхозсенче электрификаципе радиофикаци ĕçĕсем мĕнле пулса пыни çинчен ăсра-тĕсре кăна çырать.

Редакци хаçатăн страницисенче партипе комсомол пурнăçĕ, совет строительстви çинчен те сахал çырать. Стена хаçачĕсен редакторĕсене те çителĕксĕр пулăшса тăрать. Стена хаçачĕсен редакторĕсен канашлăвĕсене сайра хутра кăна ирттереççĕ, стена хаçатсен выставкине организацилемен.

ВКП(б) райкомĕн бюровĕ хаçат редакцийĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермелли майсем палăртрĕ.

В. ЧОБАЙКИН.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Чăваш Коммуни» хаçат редакцине Первомайски районĕнчи «Осоавиахим» колхозра ялхуçалăх артелĕн уставне пăсса ĕçлени, колхоз ĕçне хутшăнман З. Муштаковăпа П. Краснов тăрăшса ĕçлекен тÿрĕ кăмăллă колхозниксемпе пĕр пек правăсемпе усă курни, ферма заведующийĕ Н. Федоров колхоз лашипе хăй хуçалăхĕнче усă курнăшăн укçа тÿлеменни çинчен çыру килнĕччĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Первомайски район Совет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕ З. Муштакова колхозницăна, вăл колхоз правленийĕн решенине пăхăнмасăр хăй ирĕкĕпе 0,30 гектар çинче çĕрулми лартса пухса илнĕшĕн, суд урлă ответ тыттармалла туни, П. Краснова—колхоз членĕнчен кăларни, ферма заведующине Федоров юлташа колхоз лашипе усă курнăшăн укçа тÿлеттересси çинчен колхоз правленинче сÿтсе явма хушни çинчен пĕлтерчĕ.

* * *

Чăвашкоопинстрахкассăн Сĕнтĕрвăрринчи канмалли çуртчĕ сезона çителĕксĕр хатĕрленни çинчен çырнă çырăва «Чăваш Коммуни» хаçат редакцийĕ Чăвашкоопинстрахкасса президиумне, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма, янăччĕ.

Чăвашкоопинстрахкасса президиумĕ, корреспондент çырăвне сÿтсе явса, Сĕнтĕрвăрринчи канмалли çурта сезона хатĕрлесси çинчен ятарласа решени йышăннă. Кану çурт директорĕн ĕçĕсене тăвакан Трофимов юлташа кану çуртне электричество, радио кĕртес тата водопровод тăвас ыйтупа тивĕçлĕ организацисемпе договорсем тума, çак енĕпе Чăвашкоопинстрахкасса президиумне мартăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр проектпа смета тăратма, çурт-йĕрсене вăхăтра хатĕрлесе çитерме, сĕтел-пукан тавраш çителĕклĕ илсе хатĕрлеме хушнă.

„Чăваш Коммуни“ хаçатра çырнă хыççăн

«ПАХА ПУÇАРĂВА ПУЛСЕ ТĂРАÇÇĔ»

Ĕççынни депутачĕсен Первомайски район Совечĕн исполкомĕ «Чăваш Коммуни» хаçатра январĕн 29-мĕшĕнче пичетленнĕ «Паха пуçарăва пÿлсе тăраççĕ» ятлă çырура фактсене тĕрĕс кăтартса панни çинчен пĕлтерчĕ.

Статьяна район Совет исполкомĕн ларăвĕнче сÿтсе явнă. Исполкомăн социальнăй обеспечени пайне, суккăрсен шкулĕн заведующийĕпе Акимов юлташпа пĕрле, суккăрсен шкулĕнчи занятие организацилеме, унта икĕ эрне хушшинче вĕренекенсем илсе çитерме, шкулта вĕренмелĕх кирлине пĕтĕмпех туса пама хушнă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: «Ревизор» комедири пĕрремĕш актри сцена. Сылтăмран сулахаялла: Земляника ролĕнче—А. К. Ургалкин артист, Городничий ролĕнче—Б. С. Марков артист тата Хлопов ролĕнче—Е. Н. Никитин артист.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

„Ревизор“

Вырăс халăхĕн аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнĕ ятпа Чăвашсен государство академи театрĕ «Ревизор» комедие кăтартма тытăнчĕ. «Ревизор» комеди—вырăссен тата пĕтĕм тĕнчери классикла драматургин ылтăн фондне кĕнĕ чаплă произведени.

Н. В. Гоголь хăйĕн произведенийĕнчи художествăллă сăнарсем урлă кивĕ Российăри обществăпа политика йĕркисене хăюллăн тата генилле питлет.

Крепостла Российăра пуç пулса тăнă патша чиновникĕсен сăнарĕсене сцена çинче совет çыннисене кăтартса парасси искусство работникĕсемшĕн йывăр, анчах пархатарлă ĕç пулса тăрать.

Театр коллективĕ комедие малтанхи хут 1918 çулта, унтан 1948 çулта кăтартнă. Юбилей ячĕпе хатĕрленĕ спектакль хăйĕн художествăллă пахалăхĕпе тивĕçлĕ пусăмра тăрать.

Кашни артист хăйне май сăнар тунă. Комедири Сквозник-Дмухановский городничий рольне Б. Марков артист вылять. Гоголь çырнă «мошенниксен мошенникĕсене улталаса», çынсене хăшне хаярлăхпа, хăшне сăмахпа, хăшне чиелĕхпе пăхăнтаракан, ним именмесĕр взяткăсем илсе, хăратса пурăнакан киревсĕр городничий сăнарне артист витĕмлĕн, ĕнентерÿллĕн сăнланине палăртмалла. Городничий вăл—пĕтĕçтерсе çырнă сăнар. Çавнашкал çынсене жандармла государствăн йĕркисем çуратнă. Çакна артист тĕплĕн ăнланнă. Спектакльри городничийăн психологийĕ пьесăра пулса иртекен лару-тăрăва кура калама çук хăвăрт улшăнса пырать. Ревизор килни çинчен хыпар илтсен, вăл сасартăк хăраса каять, хыпăнса ÿкет. Унăн кусĕпуçĕ сиксе тухас пек. Хулари йĕркесĕрлĕхсем пысăк. Городничийăн чĕри таса мар. Вăл кăшкăрашать, хулана хăвăртрах йĕркене кĕртме хушать.

Хлестаковпа вара вăл пачах урăхла: лăпкă, йăпăлти, çепĕç, хăранипе хаяр сасси те таçта сухалать унăн. «Ревизортан» шикленсе хăйĕн килĕнче те чĕрне вĕççĕн çÿрет. Элек панăшăн купецсене урса кайса, этем сăнарне çухатса кăшкăрса вăрçать. Вĕсене урай тăрăх сĕтĕрет. Спектакльри городничий—нумай енлĕ сăнар. Вăл хăравçă, çавăнтах хаяр, ирсĕр чуплă этем. Çак çынтан темĕнле киревсĕр ĕç те кĕтме пулать.

РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ тата Чăваш АССР халăх артисчĕ Б. Алексеев Хлестаков рольне вылять. Артист пьесăн социальнăй енне, геройăн психологине тĕрĕс уçса панă. «Хлестаков—пьесăри чи йывăр роль», тенĕ пьеса авторĕ. Апла пулин те, пултаруллă артист çак сăнара ăнăçлă сăнласа кăтартать. Куракансен умĕнче пуш-пушă, ним чухлайман, чухлама та тăрăшман çамрăк çын. Городничий çеç, хăйĕн пысăк çылăхĕсене пула, çак «çапкаланчăка» ревизор вырăнне йышăнма пултарнă. Алексеев вылякан Хлестаков—шукăль те вĕçкĕн çын. Петербургра вăл яка тăхăнма, хăйне çиелтен чаплă кăтартма кăна вĕреннĕ. Городничийпе тĕл пулсан, вăл чĕтресе ÿкет, анчах çав вăхăтрах хăйне йĕркеллĕ, пысăк çын пек кăтартасшăн. Ансăртран ревизор пулнăскер, Хлестаков хăй умĕнче чĕтресе тăракан обывательсене тĕлĕнмелле ăста суять, хăй суйнине хăй те асăрхамасть, суйнă çемĕн хĕрсе пырать.

Чăваш театрĕн сцени çинче кăтартнă Хлестаков сăнарĕ—шăпах та Н. В. Гоголь хăй курса тăнă сăнар. «Хлестаков пачах та улталамасть, вăл суеçĕ мар, вăл хăй суйнине хăй те манать, хăй каланине хăй те ĕненет»,—тенĕ ун пирки автор.

Спектакльри уйрăммăнах палăрса тăракан тепĕр сăнар вăл—Земляника. Чăваш халăх артисчĕ А. Ургалкин ялан юраса та элек парса кăна пурăнакан провинцири тепĕр чиновник сăнарне лайăх сăнланă. Артистăн вăйăри туйăмĕсем чиновникăн сăмахĕсемпе пĕр уйрăлми таччăн çыхăнса тăраççĕ.

Училищĕсене пăхса тăракан Хлопов ролĕнчи Е. Никитин артист çакăн пек тип пулса тăрать: вăл тĕрлĕ тĕрĕслÿсенчен вĕçĕмсĕр хăрать, пуçне çĕклеме те хăяймасть. Çамрăксене вĕрентес ĕçе ун пек çакнашкал çынсене кăна шанса панă та ĕнтĕ.

Гоголь çырнă ытти персонажсене: «Ирĕк шухăшлă» Ляпкин-Тяпкин судья сăнарне Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ И. Молодов, почтăра киревсĕр ĕçсем туса пурăнакан Шпекин почтмейстер сăнарне В. Родионов артист ĕнентерÿллĕ выляççĕ.

Комедири ытти рольсене вылякансем те спектакльре пысăк çитĕнÿ тунă. Осип рольне вылякан ЧАССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Л. Семенов, Бобчинскийпе Добчинский ролĕнчи П. Ивановпа П. Ванюшин артистсем куракансен асĕнче юлаççĕ. Театр коллективĕ, спектакле лартакан режиссер—Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Л. Родионов тата П. Дмитриев художник аслă писателĕн юбилейĕ тĕлне чăннипех те лайăх парне хатĕрленĕ.

Н. ТЕРЕНТЬЕВ.

Юрă сăмахĕсем пирки

(Композитор шухăш-кăмăлĕсем)

Чăваш композиторĕсем чылай çĕнĕ юрăсем çырчĕç. Вĕсенчен нумайăшне халăх юратса юрлать. Ку ĕнтĕ, паллах, композиторсен çитĕнĕвĕ кăна мар. Кунта чăваш поэчĕсен тивĕçĕ те пысăк. Уйрăмах Тукташ, Давыдов, Алга, Урдаш поэтсен ĕçне палăртмалла. Нумаях пулмасть, çак ыйтупа «Чăваш Коммуни» хаçатра И. Пахомов корреспондент «Ирре лайăх юрăсем кирлĕ» ятлă статья кăларчĕ. Эпĕ вăл хускатнă ыйтусене тĕрĕс, питĕ кирлĕ тесе шутлатăп. Автор хăйĕн статьинче, ку ĕçри çитменлĕхсене палăртса, тĕрĕс выводсем тăвать.

Тÿрех каламалла, юлашки вăхăтра пирĕн поэтсем юрă сăмахĕсем çырас тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ. Çÿлте асăннă поэтсенчен те Давыдов кăна ялан çырать. Ĕлĕкрех юрă сăмахĕсене лайăх çырнă Эсхель, Кăлкан юлташсем халĕ, темшĕн вара, çак ĕçе мана пуçларĕç.

Çак ĕçе çамрăк поэтсем хутшăнманни, ман шутпа, пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Юлашки çулсенче ку ĕçре çĕнĕ ятсем питех те сахал пулчĕç. Чăваш совет писателĕсен тата композиторсен союзĕсен правленийĕсем çак ĕçпе кирлĕ пек интересленмеççĕ, вăл ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ. Юлашки вăхăтра юрă сăмахĕсене çырас ĕçе хутшăннă çамрăксенчен Веселов юлташăн пуçне урăх никамах та çук пулĕ... Вăл иртнĕ çулта чылай юрăсем валли лайăх сăмахсем çырса пачĕ. Эпĕ кăна ун сăмахĕсем тăрăх тăватă юрă çыртăм. Хальхи вăхăтра унăн сăмахĕсем тăрăх Лебедевпа Хирбю композиторсем çĕнĕ юрăсем çырас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Композиторсемпе поэтсен юрă тематикипе жанрне анлăлатас енĕпе малашне ытларах ĕçлемелле пулать. Колхоз пурнăçĕ, колхоз качченсемпе хĕрĕсем çинчен çырнă юрăсем пирĕн сахал мар. Çав вăхăтрах рабочисен паттăрла ĕçĕ, коммунизмăн аслă стройкисем çинчен хывнă юрăсем пачах та çук. Ку ĕнтĕ—пирĕн пысăк парăм. Кунпăн эпир, композиторсемпе поэтсем, халăх умĕнче ответлă пулса тăратпăр.

Çавăн пекех пирĕн шÿтлĕ юрăсем те çукпа пĕрех. Шÿтлĕ юрăсене халăх юрлама та, итлеме те питĕ юратать. Иккĕн е виççĕн (дуэт, трио) юрламалли юрăсем пĕре те çук. Халăх кун пек юрăсене те ыйтать.

Поэт-юрăçăн хăйĕн ĕçĕ çине тимлĕ пăхмалла, унăн хăйĕн ăсталăхне кунтан-кун ÿстерсе пымалла. Юрă валли сăвă çырма çăмăл ĕç мар, кунта пысăк пултарулăх кирлĕ. Çакна хăшпĕр юлташсем шута илесшĕн мар. Тĕслĕхрен, П. Ялгир юлташ кашни уйăхрах 10—20 сăвă çырса ярать, çав сăмахсем тăрăх композиторсене юрă çырма ыйтать, анчах сăввисем унăн пулса çитмен. Паллах ĕнтĕ, ку вăл ĕç çине çиелтен пăхнине кăтартакан тĕслĕх пулса тăрать. Япăх сăвă тăрăх юрă çырни поэтăн йăнăшне тарăнлатни кăна пулать. Пирĕн композиторсем çакна пур чухне те шута илмеççĕ, час-часах начар сăвăсем тăрăхах юрăсем çыраççĕ. Сăмахран, композиторсен пухăвĕсенче Лисковпа Хирбю çырнă хăшпĕр юрăсене сăмахĕсем начар пирки пăрахăçланă.

Композиторсемпе поэтсем хушшинче ĕçлĕхлĕ çирĕп туслăх пулма тивĕç. Унсăрăн юрăсем валли сăмахсем çырас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме май çук. Пирĕнтен халăх çĕнĕ юрăсем, лайăх юрăсем кĕтет. Çакна ялан асра тытса, ку тĕлĕшпе композиторсен те, поэтсен те куллен ĕçлес пулать.

Юрă пысăк идейăллă, тарăн шухăшлă, çын кăмăлне кăтартакан, унăн шухăш-туйăмне хумхантарма пултаракан лайăх сăмахлă пулмалла.

Ф. ЛУКИН.

Тӗнчери лару-тӑру

АГРЕССОРСЕМ ЛИССАБОНРА ТУНӐ КАВАР

Португали столицинче — Лиссабонра февралӗн 20-мӗшӗпе 25-мӗшӗ хушшинче Ҫурҫӗр Атлантика союзӗ совечӗн черетри сессийӗ пулса иртнӗ. Ҫав сесси мӗнле пулса иртнинчен тата сесси йышӑннӑ решенисенчен Америка империалисчӗсем вӑрҫа хатӗрленес ӗҫе вӑйлатма, васкасах нумай хӗҫпӑшал хатӗрлес ӗҫе анлӑрах сарма пур майсемпе те тӑрӑшни курӑнса тӑрать.

Ҫав сессире пуринчен ытларах «Европӑна хӳтӗлемелли пӗрлешӳ» текенҫкерне тӑвас сӑлтавпа Хӗвеланӑҫ Германие хӗҫпӑшаллантарасси ҫинчен сӳтсе явнӑ. Ҫак ыйту—сессире сӳтсе явнӑ тӗп ыйту пулнӑ. Пурте пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ, Атлантика блокӗ совечӗн иртнӗ ҫулхи ноябрь уйӑхӗнче Римра пулнӑ сессийӗ «Европа ҫарне» тӑвас ыйтӑва татса пама пултарайман. Ҫавӑнпа та Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен представителӗсен хӑйсене пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсен представителӗсемпе нумайччен тавлашма тата вӗсене хӗсме тивнӗ, ҫапла майпа йӗркелесе ҫитерме май килмен ыйтусем тӑрӑх «каласса татӑлма» тӑрӑшмалла пулнӑ. Кун хыҫҫӑн вара «Европа ҫарне» тӑвас ыйтӑва Лиссабонри канашлура пӑхса тухнӑ.

Лиссабонри канашлура Вашингтонри правительсем хӑйсенӗ пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсен представителӗсене хытӑ хӗснӗ. Ҫавна пула унта нимӗҫсен фашистла ҫарне тӑвасси, ӑна Ҫурҫӗр Атлантика блокӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен составне тӗп ҫар вырӑнне шутласа кӗртесси ҫинчен решени йышӑннӑ. Хӗвеланӑҫ Германие «пӗрлехи оборона» валли 12 дивизи пухтарасшӑн, вӗсене 1952 ҫул вӗҫленнӗ тӗле Америка генералӗ Эйзенхауэр аллине памалла. Унсӑр пуҫне Хӗвеланӑҫ Германин ҫар ӗҫӗн расхочӗсене витме 10 миллиард та 200 миллион доллар парас пулать. Ҫак ыйтӑва Лиссабонра, Хӗвеланӑҫ Германие халех ӗнтӗ агрессиллӗ Атлантика блокӗн членӗнче тӑнӑ пек шутласа, сӳтсе явни уйрӑмах тӗлӗнтерет. Сессире Бонри «правительствӑн» представителӗ пулман пулин те вӑрҫӑ пуҫарма хӗтӗртекенсем ҫакӑн пек решени йышӑнма именсе тӑман.

Лиссабонри канашлу уҫӑличчен Лондонра Ачесон, Иден тата Шуман пӗрле пухӑнса, Аденауэрпа канашланӑ. Вӗсем малашне «пысӑк йышлӑ ларусем» ирттерме, ҫав ларусене Хӗвеланӑҫ Германи представителӗсене чӗнме йышӑннӑ. Лиссабонри сессире Атлантика блокӗпе «Европӑна хӳтӗлемелли пӗрлешӳ» пӗр-пӗринпе мӗнле ҫыхӑнса тӑрасси ҫинчен ҫырса хатӗрленӗ доклада ырланӑ. Докладра «икӗ организаци пӗр-пӗринпе пур ыйтусем тӑрӑх та канашламаллӑ», тесе каланӑ. Унта тата «Ҫурҫӗр Атлантика союзӗн совечӗпе Европӑна хӳтӗлемелли пӗрлешӳн министрӗсен совечӗ хӑйсем кирлӗ тесе шутланӑ вӑхӑтра кашниччех пӗрлехи ларусем пухса ирттермелле», тенӗ. Ҫапла калаччен ӗнтӗ Франци правительстви Хӗвеланӑҫ Германие Атлантика блокне илессине хирӗҫ «протеслеме» хӑтланкаланӑ Франци халӑхне улталас шутпа каланӑ суя сӑмахсем кӑна пулни уҫҫӑнах курӑнса тӑрать.

Лиссабонра 1952 ҫулта 50 дивизирен тӑракан «Атлантика ҫарне» тӑвасси ҫинчен, малти линири 3.500 самолетлӑ сывлӑш-ҫарӗ тата 200 аэродром тӑвасси ҫинчен решенисем йышӑннӑ. Сесси ҫавӑн пекех Атлантика блокӗн органӗсене «урӑхлатса ҫӗнетме» решени йышӑннӑ. Империалистсен Ҫурҫӗр Атлантика союзӗ органӗсен ӗҫне ытларах централизацилемелле тунинчен, ялан ӗҫлесе тӑракан совет тума йышӑннинчен Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем вӑрҫа хатӗрленес ӗҫе вӑйлатма тата хӑйсене пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсен ҫар ӗҫне, экономикӑпа политика ӗҫӗсене пӗтӗмпех хӑйсен контрольне илме шутлани курӑнса тӑрать. Кунпа пӗрлех Атлантика блокне ертсе пыракансене союз органӗсен ӗҫӗсене «урӑхлатса ҫӗнетни» хӑйсен агрессиллӗ ӗҫӗсен «планӗсене туса хатӗрлес тапхӑртан ҫав плансене пурнӑҫлас тапхӑра куҫма» пирлӗ.

Анчах империалистсем мӗнле ирсӗр ӗҫсем тума хӑтланнине халӑхсен анлӑ массисем, тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ опычӗнчен вӗреннӗ халӑхсен массисем тимлӗ асӑрхаса тӑраҫҫӗ. Вӗсем империалистсен ҫӗнӗрен юн тӑкмалли вӑрҫӑ хатӗрлес политикине хирӗҫ протестлеҫҫӗ. Атлантика блокне хӗвеланӑҫӗнчи ҫӗршывсене «хӳтӗлес шутпа тунӑ» тесе сӳпӗлтӗтнипе агрессорсем халӑхсене улталама кӑна хӑтланаҫҫӗ. Ҫакна ӑнланса, халӑхсем хӑйсене ҫавӑн пек суя сӑмахсемпе улталама памӗҫ. Хӗвеланӑҫ Европӑри капитализмлӑ ҫӗршывсен правителӗсен ирӗксӗрех халӑх массисен шухӑшне шута илме тивет. Ахальтен мар ӗнтӗ буржуалла деятельсемпе хаҫатсем чылайӑшӗ халӑхсене лӑплантарма, халӑхсен сыхӑлӑхне хавшатма тӑрӑшаҫҫӗ, вӗсем Лиссабонра нимех те пулман, унта йышӑннӑ решенисене чӑннипе пурнӑҫа кӗртме май килмест, тесе калаҫҫӗ.

Сесси итогӗсем ҫинчен ют ҫӗршывсенчи хаҫатсем пӗлтернинчен ҫакӑ курӑнса тӑрать: Америка империалисчӗсем хӑйсене пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсене хытӑрах та хытӑрах хӗснине тата США Генеральнӑй штабӗ Хӗвеланӑҫ Европӑри ҫӗршывсене вӑрҫа хатӗрлес ӗҫе васкатма хушнине пула агрессиллӗ Атлантика блокӗнче тӑракан ҫӗршывсем хушшинчи хирӗҫӳсем хытӑ сивӗчленнӗ, ҫав хирӗҫӳсем нумай вӑйланнӑ. Ҫапла, «Нью-Йорк пост» хаҫатӑн Парижри корреспонденчӗ Сеймур «Европа ҫарне» тӑвас пирки Америка пропаганди нумай шавланине, кун пирки мухтанса кӑшкӑрнине критикӑлать. Кун пирки вӑл: ҫавӑн пек шавласа халӑхсене улталама шутлаҫҫӗ, мӗншӗн тесен блокри ҫӗршывсем хушшинчи хирӗҫӳсем сивӗчленнипе «Европӑна хӳтӗлемелли пӗрлешӳ» тӑвас ӗҫ йывӑрланнӑ. Атлантика дипломачӗсем «ҫав ыйтусене йӗркелес ӗҫре ниҫанхинчен те ытларах пӑтраша ӳкрӗҫ...», тесе ҫырать.

Халӑх массисем миршӗн тӑраҫҫӗ, вӗсем Америка ҫар ҫыннисен планӗсене хирӗҫ, вӗсене хӑйсен авантюрӑллӑ вӑрҫисенче вилсе пӗтмелли салтаксем туса хума шутланине хирӗҫ хытӑрах та хытӑрах кӗрешме тытӑнни ҫинчен Хӗвеланӑҫ Европӑри буржуалла тата пысӑк влияниллӗ хаҫатсем нумайӑшӗ уҫҫӑнах ҫыраҫҫӗ. Ют ҫӗршывсенчи хаҫатсем Лиссабонри сесси йышӑннӑ решенисене пурнӑҫласси пысӑк йывӑрлӑхсемпе ҫыхӑнса тӑнине йышӑнаҫҫӗ. Францири «Фигаро» хаҫат Атлантика блокӗн кӑҫалхи ҫул вӗҫленнӗ тӗле 50 дивизи тумалли планӗ пурнӑҫа кӗрес пирки иккӗленме тивни ҫинчен ҫырать, ҫав цифра реальнӑй мар, тет. Голландири «Телеграф» хаҫат Ҫурҫӗр Атлантика союзӗн ҫар чаҫӗсене тӑвас тӗлӗшпе Ачесон каласа панӑ цифрӑсем «халлӗхе ӗмӗт кӑна пулса тӑраҫҫӗ», тет.

Америкӑпа Англири ҫӗнӗ вӑрҫӑ пуҫарма хӗтӗртекенсемшӗн халӑх массисене суйса улталама кунтан-кун йывӑртарах та йывӑртарах пулса пырать. Халӑх массисем тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ мӗн тери пысӑк инкек кӳнине халӗ лайӑх астӑваҫҫӗ. Империалистсем мӗнле ирсӗр ӗҫсем тума хатӗрленнине халӑх массисем хытӑ асӑрхаса тӑраҫҫӗ. Халӑх массисем империалистсен агрессиллӗ преступникла планӗсене путлантарса лартассишӗн кӗрешме хатӗр.

ИМПЕРИАЛИСТСЕМ ҪЫВӐХ ХӖВЕЛТУХӐҪӖПЕ ВӐТАҪӖР ХӖВЕЛТУХӐҪӖНЧЕ ИРСӖР ӖҪСЕМ ТУМА ХӐТЛАНАҪҪӖ

«Вӑтаҫӗр Хӗвелтухӑҫӗнчи командовани» тумалли плана Ҫывӑх Хӗвелтухӑҫӗпе Вӑтаҫӗр Хӗвелтухӑҫӗнчи ҫӗршывсем 1951 ҫул вӗҫленнӗ вӑхӑтра сирсе ячӗҫ. Халӗ вара США-па Англи ҫав агрессиллӗ плана пурнӑҫлас ӗҫе ҫӗнӗрен пуҫарма, ҫав плана хӑшпӗр енӗпе улӑштарса, арабсен ҫӗршывӗсене йышӑнтарма тӑрӑшаҫҫӗ.

Юлашки вӑхӑтра Америкӑпа Англи дипломачӗсем арабсен пур ҫӗршывӗсенчи столицӗсенче те активлӑ ӗҫлеме тытӑннӑ.

Хӑйсен захватчикла планӗсене пурнӑҫлас шутпа империалистсем арабсен ҫӗршывӗсен правительствисене хытӑ хӗсеҫҫӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех вӗсем хӑйсен ӗҫне арабсен ҫӗршывӗсен правительствисене пӗр-пӗринпе калаҫса татӑлма пулӑшакан ҫынсене, чӑннипе агрессорсен агенчӗсем пулса тӑраканскерсене, хутшӑнтараҫҫӗ.

Анчах империалистсем Ҫывӑх Хӗвелтухӑҫӗпе Вӑтаҫӗр Хӗвелтухӑҫӗнчи ҫӗршывсене мӗн чухлӗ хытӑрах хӗсеҫҫӗ, вӗсен планӗсене хирӗҫ пусмӑрти халӑхсем ҫавӑн чухлӗ вӑйлӑрах кӗрешеҫҫӗ, империалистсене отпор вӑйлӑрах параҫҫӗ. Империалистсен интересӗсене хӳтӗлекен пур плансене те арабсен ҫӗршывӗсенчи халӑхсем сирсе ярӗҫ, тесе ҫырать Сирире тухакан «Аль-Кафилия» хаҫат.

АМЕРИКӐПА МЕКСИКА ХУШШИНЧЕ ҪАР ӖҪЕ ЫЙТӐВӖСЕМПЕ ПЫРАКАН КАЛАҪУСЕМ ӐНӐҪСАР ПУЛНӐ

США-па Мексика хушшинче ҫар ӗҫӗ енӗпе калаҫусем пынӑ. Вӗсен представителӗсем США Мексикӑна ҫар ӗҫӗ енӗпе «пулӑшу парасси» ҫинчен канашланӑ. Ку калаҫусем икӗ эрне пынӑ. Февралӗн 16-мӗшӗнче калаҫусем сасартӑк чарӑнса ларнӑ. Кун пирки юлашки вӑхӑтра ют ҫӗршывсенчи хаҫатсем нумай ҫырчӗҫ, вӗсем Америка дипломатийӗн ӗҫӗсем мӗншӗн ӑнӑҫлӑ пулманни ҫинчен ӑнлантарса пама хӑтланчӗҫ.

«Нью-Йорк таймс» хаҫатра редакци ҫырнӑ статья пичетленсе тухнӑ. Ҫав статьяра калаҫусем чарӑнса ларнӑ пирки Америка «пулӑшӑвӗ» хисепрен тухассине, ӑна шанса тӑма пӑрахас хӑрушлӑх тухса тӑма пултарассине палӑртнӑ. Хаҫат кун пирки шикленсе ҫырать. Мексикӑри прогрессивнӑй хаҫатсем калаҫусем чарӑнса ларнине США Мексикӑра тата Латинла Америка ҫӗршывӗсенче пурнӑҫласа пыракан тата вӑрҫӑ хатӗрлес ӗҫе туса пыракан дипломатин пысӑк пораженийӗсенчен пӗри тесе хак параҫҫӗ.

«Хӑрушсӑрлӑха перле хӳтӗлесси ҫинчен йышӑннӑ закон» текенскерӗ тӑрӑх пулӑшу парас пирки Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем хӑйсем майлӑ тӑракан ҫӗршывсене ирӗксӗрлесех йышӑнтаракан килӗшӳсенче мӗн ҫинчен ҫыраҫҫӗ-ха? Ҫакӑ паллӑ: асӑннӑ килӗшӳсем ҫине алӑ пусакан ҫӗршывсен хӑйсен ҫарӗсене, ҫар базисене, сывлӑш-ҫарӗпе тинӗс-ҫар вӑйӗсене тата пӗтӗм ресурсӗсене Америка империалисчӗсен аллине памалла. Ҫакӑ вӗсен экономикине пӗтӗмпех Америка империалисчӗсене пӑхӑнтарасси патне тата вӗсен нациллӗ никама пӑхӑнманлӑхӗ пӗтсе ларасси патне илсе пырать.

Ҫавӑнпа та Мексикӑра США хӗснипе пуҫланнӑ калаҫусене, ҫар ӗҫӗ ыйтӑвӗсемпе калаҫнине хирӗҫ халӑх массисем протестлеме тытӑннинчен нимӗн тӗлӗнмелли те ҫук. «Нью-Йорк таймс» хаҫат корреспонденчӗн ирӗксӗрех Мексикӑри пӗтӗм халӑх США-н захватчикла политикине хирӗҫ тӑнине йышӑнма тивет, Мексика правительствин халӑх хирӗҫ тӑнине шута илмелле, ирӗксӗрех калаҫусене чарса лартмалла пулнӑ.

Мексикӑри власра тӑракан реакционерсемпе Америка агрессорӗсем пӗрле калаҫса татӑлса кавар тума хӑтланни акӑ мӗнле сӑлтавсене пула чарӑнса ларнӑ: Мексикӑри демократиллӗ вӑйсен пӗрлӗхӗ кунтан-кун ытларах та ытларах тӗреклене пырать, халӑхӑн анлӑ массисем вӑрҫӑ хатӗрлес политикӑна хирӗҫ кунтан-кун хытӑрах та хытӑрах кӗрешеҫҫӗ. Мексика патриочӗсен ӑнӑҫлӑ кӗрешӗвӗ Латинла Америкӑри вуншар миллион рядовой ҫынсем миршӗн, ирӗклӗхпе никама пӑхӑнманлӑхшӑн, США империалисчӗсем ҫав ҫӗршывсене Уолл-стрит колонийӗ туса хума хӑтланнине хирӗҫ кӗрешнипе пӗрлешсе пырать.

И. САПЛИН.
А. МИЛИКЯН.

Кореӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн главнӑй командованийӗн паянхи пӗлтерӗвӗнче ҫапла каланӑ: Халӑх ҫарӗн соединенийӗсем Китай халӑх добровольцӗсен чаҫӗсемпе пӗрле пур фронтсенче те тӑшмана хирӗҫ уйрӑм вырӑнсенче ҫапӑҫаҫҫӗ.

Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ ҫапӑҫакан салтакӗсем паян тӑшманӑн икӗ самолетне персе ӳкернӗ.

Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин ҫар комитечӗ йышӑннӑ постановлени

ПХЕНЬЯН, февралӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Корейӑн тӗп телеграф агентстви Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин ҫар комитечӗ Америка агрессорӗсем бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курнине пула ерекен чир-чӗр сарӑлассине хирӗҫ кӗрешмелли мерӑсем ҫинчен постановлени йышӑнни ҫинчен пӗлтернӗ, ҫав постановление хаҫатсем ҫинче пичетлеме панӑ.

Чир-чӗрсем сарӑлассине чарса лартас шутпа Корея Халӑх ҫарӗн воинӗсемпе Китай халӑх добровольцӗсен чаҫӗсенчи воинӗсене тата вырӑнти халӑха чир ересине хирӗҫ прививка тӑваҫҫӗ. Постановленире шыв ӑсмалли ҫӑлсене тата ҫавӑн йышши сооруженисене ҫирӗп контроллесе тӑмалли йӗрке тумалли ҫинчен каланӑ.

Бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курнине хирӗҫ татӑклӑ мерӑсем йышӑнма ыйтаҫҫӗ

ПЕКИН, февралӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Китайри хаҫатсем Америка агрессорӗсен тискер ӗҫӗсене—Корея халӑхне пӗтерме бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курнине хирӗҫ хытӑ протестлеҫҫӗ. Шанхайра тухакан «Дагунбао» хаҫат агрессорсен ҫав преступникла ӗҫӗсене хирӗҫ татӑклӑ мерӑсем йышӑнма ыйтать. Америка империалисчӗсене паян, вӗсем Корейӑра вилӗм кӳрекен бактерисем сарнӑ чухне чармасан, вӗсем ыран ҫав бактерисене ытти ҫӗршывсем ҫине пырса ярӗҫ, тесе ҫырать хаҫат.

Шанхайри «Цзефанжибао» хаҫат ҫапла ҫырать: Хӗвелтухӑҫ Китайри халӑх тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ ҫулӗсенче Япони империалисчӗсем Чжэцзяньре, Хунаньре тата Китайӑн ытти провинцийӗсенче бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курнинчен хӑй мӗн чухлӗ инкек курнине халӗ те астӑвать. Хӗвелтухӑҫ Китайри халӑх бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ куракан преступниксене аркатса тӑкма Китай халӑх добровольцӗсемпе Корея Халӑх ҫарне пур майсемпе те пулӑшса пырӗ.

Америка агрессорӗсене хирӗҫ халех витӗмлӗ мерӑсем йышӑнма «Синьвэньжибао» хаҫат мире юратакан мӗнпур халӑхсене чӗнет, Америка агрессорӗсем хӑйсен преступникла ӗҫӗсемшӗн ответ тытма тивӗҫлӗ, тет.

ПРАГА, февралӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Америка агрессорӗсем Корейӑра бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курнӑ пирки Чехословаки халӑхӗ хытӑ тарӑхать. Хаҫатсем ҫинче империалистсен ҫав пите тискер ӗҫӗсене хирӗҫ ӗҫсыннисем протестлесе ҫырнӑ ҫырусем нумай пичетленсе тухаҫҫӗ. Б. Новы писатель «Руде право» хаҫатра Корейӑн паттӑр халӑхне хирӗҫ бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курнӑ тискер агрессорсене хытӑ айӑпласа наказани парассине шанса тӑни ҫинчен ҫырать.

Тӗнчери ҫӗршывсен Мускаври экономикӑллӑ канашлӑвӗ ҫинчен Китай хаҫачӗ мӗн ҫырать

ПЕКИН, февралӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). «Цзиньбужибао» хаҫат тӗнчери ҫӗршывсен Мускавра пулмалли экономикӑллӑ канашлӑвӗ ҫинчен умстатья пичетленӗ. Унта вӑл: «Китай халӑхӗ ҫав канашлӑва пухнине ырлать, ҫав канашлу вӑл тӗнчери ҫӗршывсем экономика енӗпе килӗштерсе ӗҫлессине ҫирӗплетме пулӑшать», тенӗ.

Европӑри, Америкӑри тата Азири капитализмлӑ тӗрлӗ ҫӗршывсенчи сутӑҫсем, промышленность предприятийӗсен хуҫисем, экономистсем тата кооперативлӑ организацисем ҫав канашлупа интересленни, ҫав канашлу вӗсене Совет Союзӗнчи, Китайри тата халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи суту-илӳпе экономика организацийӗсемпе ҫыхӑнма май парасси ҫинчен каласа, хаҫат ҫапла ҫырать: «Ҫавӑн пек интересленнинчен пӗтӗм тӗнчери халӑхсем аслӑ Генералиссимус Сталин социализмлӑ системӑпа капитализмлӑ система пӗр-пӗринпе мирлӗ пурӑнма пултарни ҫинчен калани ырлани курӑнать. Тӗнчери ҫӗршывсем экономика енӗпе йӗркеллӗ ҫыхӑнусем тытмалла тӑвасси, йӗркеллӗ ҫыхӑнусем тытма чӑрмантаракан сӑлтавсене пӗтересси—ҫаксем тӗнчери мӗнпур ҫӗршывсенчи халӑхсен анлӑ массисен требованийӗсем пулса тӑраҫҫӗ».

Индонезире тӗнчери ҫӗршывсен Мускавра пулмалли экономикӑллӑ канашлӑвне хатӗрленеҫҫӗ

ГААГА, февралӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Голланди хаҫачӗсем Индонезири сутӑҫсем тата промышленность предприятисен хуҫисем тӗнчери ҫӗршывсен Мускавра пулмалли экономикӑллӑ канашлӑвӗпе хытӑ интересленни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Сӑмахран, «Хет Фадерланд» хаҫат ҫапла ҫырать: «ҫитес вӑхӑтрах Индонезин экономика деятелӗсен делегацийӗ Мускава каять. Делегацие Асманун доктор ертсе пырать. Вӑл экономика ыйтӑвӗсемпе паллӑ эксперт пулса тӑрать тата экономика ыйтӑвӗсене лайӑх пӗлет. Асманун нумай пулмасть Японирен таврӑннӑ, унта Японипе суту-илӳ договорӗ тӑвасси ҫинчен калаҫнӑ. Вӑл Австралире те пулнӑ, унта суту-илӳ договорӗ туса алӑ пуснӑ. Асманун доктор Мускава кайма, унта тӗнчери ҫӗршывсен экономикӑллӑ канашлӑвӗнче пулма тӑрӑшать», тет хаҫат.

Англире ӗҫсӗр тӑрса юлнӑ ҫынсен йышӗ ӳсет

ЛОНДОН, февралӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаҫат халӑха куллен кирлӗ таварсем туса тӑракан промышленность отраслӗсенче ӗҫсӗр тӑрса юлнӑ ҫынсен йышӗ ӳсни ҫинчен ҫырать. Ӗҫсӗр тӑрса юлнӑ ҫынсен йышӗ ҫак сӑлтава пула ӳсет: ӗҫсыннисен пурнӑҫӗ начарланса пырать, халӑх хӑйне кирлӗ япаласене ҫителӗклӗ таран туянма вӑй ҫитерейменсӗр кун пирки куллен кирлӗ таварсем туса кӑларасси чакать. Халӗ вара промышленноҫӑн автомобиль, ҫӑмӑл машиностроени тата судостроени отраслӗсенче те ӗҫсӗр тӑрса юлнисен йышӗ ӳсет. Вӗсенче хурҫӑ ҫитмест, ҫавна пула рабочисем ӗҫсӗр тӑрса юлаҫҫӗ, ҫав отраслӗсенче хурҫӑ ҫитменни ҫакӑнтан килет: хурҫа чи малтан ҫар заказӗсене пурнӑҫлакан предприятисене параҫҫӗ.

Правительство строительство промышленноҫӗ валли укҫа сахалтарах парасшӑн. Ҫавна пула уйрӑм хуҫасен фирмисемпе муниципальнӑй влаҫсем строительствӑпа юсав ӗҫӗсем валли укҫа кивҫен илнӗ чухне пысӑк йывӑрлӑхсемпе тӗл пулаҫҫӗ. Кун пирки строительство ӗҫӗсене чакарма тивет, ҫавна пула ӗҫсӗр тӑрса юлнисен йышӗ ӳсе пырать. Ӗҫсӗр тӑрса юлнӑ ҫынсен йышӗ уйрӑмах Кӑнтӑр Уэльсра, Ланкаширта тата Шотландире пысӑк.

«Дейли уоркер» хаҫатра пӗлтернӗ тӑрӑх, халӗ Англире ӗҫсӗр тӑрса юлнисем пӗтӗмпе 600 пин ҫынна яхӑн, вӗсен йышӗ ӳсе пырать.

ФИНЛЯНДИРИ ОБЩЕСТВЕННОСТЬ Н. В. ГОГОЛЬ ВИЛНӖРЕНПЕ 100 ҪУЛ ТУЛТАРНИНЕ ПАЛӐРТМА ХАТӖРЛЕНЕТ

ХЕЛЬСИНКИ, февралӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Финляндири общественность вырӑссен аслӑ писателӗ Н. В. Гоголь вилнӗренпе 100 ҫул тултарнине анлӑ палӑртма хатӗрленет. «СНС» хаҫатӑн юлашки номерне питӗ илемлетсе кӑларнӑ, вӑл нумай сӑрсемлӗ ӳкерчӗксемпе илемлетнӗ журнал пекех. Хаҫат Гоголь портретне, писатель произведенийӗсем тӑрӑх совет художникӗсем ӳкернӗ ҫӗнӗ ӳкерчӗксене, Гоголе асӑнса ҫырнӑ материалсене пичетлесе кӑларнӑ. «СНС» хаҫатӑн тепӗр номерӗнче пӗтӗмпех Гоголь пурнӑҫӗпе творчестви ҫинчен ҫырнӑ материалсене пичетлеҫҫӗ.

«Финляндия—Советский Союз» обществин литература секцийӗ Гоголе хисеплесе асӑнмалли чаплӑ пуху ирттерет. Хельсинки хулинче Гоголь пурнӑҫӗпе тата ӗҫӗсемпе паллаштаракан выставка организацилеҫҫӗ. Вырӑссен аслӑ писательне хисеплесе асӑнас ятпа Туркупа Тампере хулисенче те чаплӑ пухусем ирттерме палӑртнӑ.

ЛИВАНА АМЕРИКА «СПЕЦИАЛИСЧЕСЕМ» НУМАЙ ПЫРСА ТУЛНӐ

БЕЙРУТ, февралӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Хаҫатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, февралӗн 25-мӗшӗнче Бейрута Америка миссийӗ пырса ҫитнӗ. Миссире Америка ҫар «экспериӗсем» 28 ҫын. Вӗсене финанс, суту-илӳ тата ытти ӗҫсен «специалисчӗсем» тесе Ливана янӑ. Ҫав мисси Ливанӑ официальнӑй Америкӑн «Пан-Американ эйруэйс» текен авиаци компанийӗн уйрӑмӗ чӗннипе пынӑ. Анчах «Аль-Халаф» тата «Ас-Сабах» хаҫатсем ҫав миссин чӑн-чӑн тӗллевӗ «ҫӗршыври аэродромсем мӗнлине тата Ливанпа ытти ҫӗршывсем хушшинчи ҫул-йӗрсем мӗнлине тӗпчесе вӗренесси пулать», тесе ҫыраҫҫӗ.

Хоккей вӑййипе республикӑра мала тухассишӗн

Февралӗн 28-мӗшӗнче Ҫӗмӗрлери «Урожай» спорт обществипе Етӗрнери «Искра» спорт обществин командисем тата Улатӑрти «Локомотив» спорт обществипе Чапаевски поселокри хоккей командисем тӗл пулса вылянӑ. Ҫак вӑйӑсенче ҫӗмӗрлесем 7:1 шутпа тата улатӑрсем 6:2 шутпа ҫӗнтернӗ.

Хоккей вӑййипе республикӑра мала тухассишӗн пыракан ӑмӑртура февралӗн 29-мӗшӗнче Улатӑрти «Локомотив» спорт обществипе Етӗрнери «Искра» спорт обществи хоккеисчӗсем тӗл пулса выляреҫ. Вӑйӑра Улатӑр хулин команди 8:2 шутпа ҫӗнтерчӗ.

Ҫӗмӗрлери «Урожай» спорт обществи команди Чапаевски поселокри хоккей командине 6:1 шутпа ҫӗнтерчӗ.

Пирӗн земляк Перово хулин чемпионӗ

Мускав облаҫӗнчи Перово хулинче хӗллехи спорт сезонӗнче пулса иртнӗ йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвӗсенче ҫемиҫе хутчен ӗнтӗ Александр Селенин лайӑх тӗслӗх кӑтартса малти вырӑна тухать.

Александр Селенин Чӑваш республикинче ВЛКСМ Чкаловски райкомӗн секретарӗ пулса ӗҫленӗ. Халӗ вӑл ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗ ҫумӗнчи шкулта вӗренет. Пушӑ вӑхӑтра яланах йӗлтӗрпе ҫӳреме юратать.

Иртнӗ ҫулхи декабрь уйӑхӗнче хӗллехи спорт сезонне уҫнӑ ятпа пулнӑ ӑмӑртура Александр Селенин йӗлтӗрпе 5 километра 18 минут та 50 секундра чупса тухса ҫак дистанцире пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ.

Январь уйӑхӗнче чи лайӑх 200 йӗлтӗрҫӗ Перово хулинче мала тухассишӗн ӑмӑртрӗҫ. Ҫак ӑмӑртура Александр Селенин 10 километра чупса пӗрремӗш вырӑн йышӑнать. Ӑна «Перово хулин чемпионӗ» ятне параҫҫӗ, парнелеҫҫӗ.

Ҫак кунсенче Перово хулинче хӗллехи кросс пулса иртрӗ. Чемпион 10 километра 39 минут та 30 секундра чупса тухрӗ, 1-мӗш спорт разрядӗнчи нормӑна ӑнӑҫлӑ тултарчӗ.

Я. ПРОКОПЬЕВ.

Ялти лектори

КУСЛАВККА. Минкӗш ялӗнче лекторсен групп ӗҫлет. Ӑна Жданов ячӗпе тӑракан колхозри парторганизаци секретарӗ А. Белкин юлташ ертсе пырать. Лектори колхозри специалистсене, учительсемпе медицина работникӗсене пӗрлештерсе тӑрать.

Лектори ӗҫсыннисем хушшинче докладсемпе лекцисем ирттерес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем тӑвать. Лектори членӗсем Г. Иванов, Н. Еремеев, В. Трофимов, А. Белкин юлташсем колхозниксене час-часах лекцисем вуласа параҫҫӗ.

Ҫак кунсенче В. Трофимов юлташ «Коммунизмӑн аслӑ стройкисем» тема тӑрӑх лекци вуларӗ. Лекторсем ҫавӑн пекех СССР халӑх хуҫалӑхне малалла аталантармалли государство планне 1951 ҫулта тултарни ҫинчен колхозниксем хушшинче докладсем ирттерчӗҫ. Халӗ Чӑваш АССР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учительници Е. Николаева юлташ Н. В. Гоголь вилнӗренпе 100 ҫул тултарнӑ кун тӗлне унӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен доклад тума хатӗрленет.

Ытти лекторсем «Хӗвел мӗншӗн тӗттӗмленни ҫинчен» лекцисем вуласа панӑ.

Лекторсем обществӑллӑ ӗҫе те активлӑ хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем ялти активпа Н. В. Гоголь ҫырнӑ «Ревизор» пьесӑн сыпӑкне вырӑсла выляма хатӗрлеҫҫӗ.

И. СИДОРКИН.

Агитаторсемпе пропагандистсен канашлӑвӗ

ЕЛЧӖК. (Хамӑр корр.). Районта агитаторсемпе пропагандистсен канашлӑвне ирттерчӗҫ. ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Филиппова юлташ «Халӑх хуҫалӑхне аталантармалли 1951 ҫулхи плана тултарни тата 1952 ҫулта агитаторсем умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен» доклад туса пачӗ.

Агитаторсемпе пропагандистсем доклада активлӑ сӳтсе яврӗҫ, хӑйсем умӗнче тӑракан задачӑсене палӑртрӗҫ.

Пӗлтерни

Ыран, мартӑн 3-мӗшӗнче, ВКП(б) хула комитечӗн парткабинетӗнче каҫхине 8 сехетре «Н. В. Гоголь—вырӑссен аслӑ писателӗ» темӑпа лекци пулать.

Лекцие Б. А. Брэйтман юлташ вулать.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧЕ.

Франци правительствин кризисӗ

ПАРИЖ, февралӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Паян, Наци пухӑвӗн пӗрлехи ларӑвӗнче, налогсене 15 процент ӳстересси ҫинчен сӳтсе явнӑ чухне, радикалсен партийӗн членӗ Эдгар Фор ертсе пыракан правительствӑна шанас марри ҫинчен решени йышӑннӑ. Правительствӑна шанассишӗн 283 депутат, хирӗҫ—309 депутат сасӑланӑ. Сасӑлани результачӗсем паллӑ пулнӑ хыҫҫӑн Фор хӑйӗн кабинечӗ отставкӑна тухни ҫинчен Ориоль президента пӗлтернӗ. Президент правительство отставкӑна тухнипе килӗшнӗ. Ҫапла вара, Францире тепӗр хут правительство кризисӗ пуҫланнӑ.

ПАРИЖ, февралӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Каҫхине ҫакӑ паллӑ пулнӑ: Венсан Ориоль президент ҫӗнӗ правительство туса йӗркелеме Поль Рейнона сӗннӗ. Поль Рейно—вӑл сылтӑм шухӑшлӑ политикӑллӑ деятель пулнине пурте пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ. Рейно хальхи вӑхӑтра Англире. Вӑл хӑй правительство туса йӗркелеме килӗшни ҫинчен пӗлтернӗ.

ФРАНЦИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙЕ ТУНӐ ҪИТӖНӲСЕМ

ПАРИЖ, февралӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). «Юманите» хаҫат муниципалитетсен уйрӑм советникӗсене суйланӑ ҫӗрте Францири коммунистсен партийӗ ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем туни ҫинчен пӗлтерет. Соммер хулин (Гар департаменчӗ) муниципальнӑй советне суйланӑ суйлавҫӑсен пысӑк пайӗ коммунистсен партийӗн вырӑнти организацийӗн икӗ кандидачӗшӗн сасӑланӑ, вӗсене муниципальнӑй совета суйланӑ. Социалистсен партийӗн кандидачӗсене суйламан.

Америка оккупацийӗнне хирӗҫ

РИМ, февралӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Хаҫатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, демократиллӗ общественность пуҫарнипе мартӑн 1-мӗшӗпе 2-мӗшӗнче Ливорно хулинче «оккупацилеӗ хуласенчи общественноҫӑн конференцине» пухма палӑртнӑ. Конференцие Италин портлӑ хулисенчен тата районӗсенчен, де Гаспери правительстви килӗшнипе Америка ҫар базисем туса хунӑ вырӑнсенчен делегатсем пухӑнаҫҫӗ. Хаҫатсем конференци Италие США плацдармӗ туса хурассине хирӗҫ тата Америка оккупанчӗсем Неапольте, Ливорнӑра, Флоренцире, Улинӑра, Бриндизире тата ҫӗршыври ытти пысӑк центрсенче пуҫ пулса тӑнине хирӗҫ кӗрешессипе ҫыхӑнса тӑракан ыйтусене сӳтсе явасси ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Конференцие пухас тӗлӗшпе ӗҫлекен комитета паллӑ ученӑйсем, юристсем, писательсем, врачсем, парламентпа муниципальнӑй советсен деятелӗсем кӗнӗ.

АМЕРИКАНЕЦСЕМ НИМӖҪСЕН ҪАР ПРЕСТУПНИКӖСЕНЕ ТӖРМЕСЕНЧЕН КӐЛАРАҪҪӖ

БЕРЛИН, февралӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). АДН агентстви ҫакӑн ҫинчен пӗлтерет: паян Америкӑн Гейдельбергри штабӗ хушнипе Ландсбергри американецсен аллинчи тӗрмерен ултӑ ҫар преступникне ирӗке кӑларнӑ. Ирӗке кӑларнисенчен иккӗшне союзниксен сывлӑш-ҫарӗсен летчикӗсене вӗлернӗ ҫӗре хутшӑннӑшӑн, тепӗр тӑватӑ ҫыннине концентраци лагерӗсенчи ҫынсем тӗлӗшпе тискер ӗҫсем тунӑшӑн айӑпласа суд тунӑ пулнӑ, вӗсене пурне те каторга тӗрмисенче нумай вӑхӑт хушши хупса усрама приговор йышӑннӑ пулнӑ.

ЧӐВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ
Паян, мартӑн 2-мӗшӗнче, вырӑсла ҫӗнӗ спектакль
„Три сестры"
Ыран, мартӑн 3-мӗшӗнче, вырӑсла спектакль
„ЖЕНИТЬБА"
Спектакльсем каҫхине 8 сехетре пуҫланаҫҫӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлӑ редактор—0-67, ответлӑ редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑҫ пайӗ—4-17, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, пропаганда пайӗ—8-61, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 01254 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.